# Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çырупа паллаштарчĕ ● 4-5 стр.


*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

2(975) №, 2017, кăрлач/январь, 21

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.


ÇĂЛТĂР ÇӲПÇИ

## Пĕртен-пĕр арçын

– Юратнă хаçатăмăр тин çеç тухма пуçларĕ пек. 20 çул çитни сисĕнмерĕ те. Унăн историйĕнче манăн ятăм та пурри, паллах, савăнтарать. Хаçатра ĕçленĕ корреспондентсенчен эпĕ – пĕртен-пĕр арçын. Çакă та хăйне евĕр чыс. Паллах, «Хыпар» хаçатран «Чăваш хĕрарăмне» куçарнине ун чухне кăмăлласах та йышăнманччĕ-ха эпĕ. Ара, маншăн «Хыпар» сумлăрах шутланнă. Анчах çак кӳренӳ часах сĕвĕрĕлчĕ. Халĕ пĕр ӳпкев те, пĕр кӳренӳ те çук ĕнтĕ. Паян ĕçлеме сĕнсен 20 çул каяллахи пек турткаланмăттăм, пĕр иккĕленмесĕр килĕшĕттĕм.



Сарри МИШШИ, профессор, философи наукисен тухтăрĕ

Малтанхи тапхăрта хаçата черетлесе пĕчченшерĕн кăлараттăмăр та – çăмăлах марччĕ. Çынсемпе те тĕл пулмалла, материал та çырмалла... Апла пулин те йăтса тухрăмăр. Валентина Смирновăпа, Галина Матвеевăпа, Маргарита Ильинапа килĕштерсе тăрăшаттăмăр. Хĕрсем ĕçлеме вĕрентрĕç тесе те уççăнах калама пултаратăп. Ун чухне сăвă та çыркалаттăм-ха, вĕсем те пичетленетчĕç. Тăрăшса, чунран ĕçленĕ паллах: тумаллине – тунă, каламаллине – каланă.

3 çул ĕçлерĕм «Чăваш хĕрарăмĕнче». Çак тапхăрта аса илмеллисем те пулнах. Пĕрре çапла Валентина Смирновăпа иксĕмĕр те пĕр ватă тухтăрпа калаçса материал хатĕрленĕччĕ. Çакна хамăр пĕлмен те. «Хыпар» тĕп редакторĕ Алексей Леонтьев никамăн материалне те пăрахăçламанччĕ, иксĕмĕрĕннипе те усă курнăччĕ, пичетленĕччĕ.

Чăваш халăх историйĕпе çыхăннă материалсем те пĕрре мар хатĕрленĕ. Шăпах çакăн йышшисем тепĕр чухне хаçатра çитмеççĕ пек туйăнать. Хаçат философине илес тĕк, вăл паллах, чи малтанах çемье ыйтăвĕсем, арçынпа хĕрарăм хутшăнăвĕсем çинче йĕркеленет. Хамăр та ку ыйтусене пĕрре мар çутатнă. Ял халăхĕ мĕнле пурăннине, уйра епле тăрăшнине çырса кăтартнă, арăмĕпе упăшкин хăйсене епле тытмаллине те тишкернĕ...

Хаçатра ĕçленĕ вăхăтрах диссертаци çырса хӳтĕлентĕм те философи енне туртăнтăм. Студентсемпе ĕçлеме пуçларăм. Халĕ килте ларатăп ĕнтĕ. Аван пурăнатăп. Вулакансене те яланах «лайăх пурăнатăп» теме сунатăп.



## Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 21.01 | – 7 | –10 |
| 22.01 | – 9 | –11 |
| 23.01 | – 8 | –11 |
| 24.01 | – 7 | –10 |
| 25.01 | –11 | –19 |
| 26.01 | –21 | –26 |
| 27.01 | –22 | –26 |


●Ырă халăх тĕпренчĕкĕ – Шурă Лаша 2 стр.

●Ача прависене хӳтĕлекен Чăваш Енре те пулатех 3 стр.

●Чей кăмпи – çут çанталăк тухтăрĕ 8 стр.

●Ура хускалманни пурнăçра ăнăçтарма чăрмантармасть 11 стр.




# Чун тасалать, кĕлетке çăмăлланать

**Йĕри-тавра чăваш юрри янăрать, шашлăк шăрши сарăлнă, халăх киленсе калаçни хăлхана кĕрет. Çакнашкал кĕтсе илчĕ мана Шупашкарти арçынсен Çветтуй Троица мăнастирĕпе юнашар хатĕрленĕ шыва кĕмелли вырăн. Кăрлачăн 19-мĕшĕнче кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче çакăнта халăх йышлă пуçтарăннă. Республикăри бокс федерацийĕн спортсменĕсем пĕрин хыççăн тепри вакка сикрĕç. «Кăшарнире шыва кĕме хăнăхнă. Çак йăлана 17 çул тытса пыратпăр», – теççĕ вĕсем.**

Алина Карпова хуралçă темиçе çул каялла вилес пекех выртнă. «Турă хуйхă урлă хăйĕн патне чĕнсе илчĕ мана. Халĕ унăн хăватне туйса пурăнатăп. Вăй илсе ура çине тăрсанах унпа пĕрле пулас килчĕ. Турă пире пăрахмасть. Кăшарнире виççĕмĕш çул вакри шывпа чӳхенетĕп. Çакă усал-тĕселе, чир-чĕре сирет. Çакăн хыççăн çунат хушăннăнах туйăнать, хальхинчен те лайăххах пурăнас килет», – чунне уçать хĕрарăм. Унпа пĕрле килнисем те чун тасалса кĕлетке çăмăлланни тавра калаçрĕç.

«Кашни çулах мăшăрăма хампа пĕрле чĕнетĕп. Ниепле те ӳкĕте кĕртме çук ăна. Пĕлтĕр, сăмахран, эпĕ шыва кĕнине пăхса тăрсах чĕтреме пуçларĕ», – хушса калать Наталья Маряхина.

76-ри Нелли Михайловна лару-тăрупа паллашмашкăн ятарласах килнĕ çакăнта. «Чир-чĕр аптăратман пулсанах чӳхенсе тухăттăм», – вак патнелле утакансене сăнать хĕрарăм. Шыва кĕрекенсене хавхалантарма та сăмах тупать вăл.

«Питĕ чаплă!» – сивĕ шывра çăвăнса тухнă Николай Васильев вĕри чей ĕçнĕ май питĕ хăпартланса калаçать. Çамрăк чухнех, совет влаçĕ вăхăтĕнче, тĕне ĕненнине, хĕрес çакнине палăртать вăл.

Парикмахерта ĕçлекен Лидия вакри пăрлă шывпа 20 çул ытла пиçĕхтерет хăйĕн кĕлеткине. «Ним мар тепре кĕрсе тухма пултаратăп», – тет сивве чăтăмлăскер.

Çакăнта сывлăх, полици, МЧС ĕçченĕсем дежурствăна тухнă. Пĕтĕмĕшле илсен – йĕркене пăсакан, хăйне япăх туякан çук. МЧС ĕçченĕ Виталий Васильев сивĕ шыва чăмса тухакансене шутласа тăрать. 5 сехетре, тĕслĕхрен, 385 çын вакка сикнĕ. Ытларахăшĕ – çамрăксем, аслă ӳсĕмри çынсем. Вуннăри арçын ача та ашшĕпе пĕрле килнĕ. Кăрлачăн 18-мĕшĕнче шыва кĕрекенсем уйрăмах йышлă пулнă. Сăмах май, пирĕн республикăра шыва кĕмелли 67 вырăн хатĕрленĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Автор сăнӳкерчĕкĕ.

ПУЛТАРУЛĂХ

# “Эпĕ – ыră халăх тĕпренчĕкĕ”

**Çапла та пулса иртет пурнăçра. Нумай çул пĕлнĕ тесе шутланă çынна кĕтмен çĕртен пач урăх енчен “уçатăн”. Паян вулакана каласа кăтартас текенскер – шăпах çакăн йышшисенчен. Пĕр шкултах ăс пухнă унпа. Тантăшĕсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăманнипе – асăрхаман. Чăваш калашле, ыттисенчен мала та иртмен, кая та юлман вăл. Шкултан вĕренсе тухса кайнă хыççăн вара – ак тамаша! – ентешĕмĕре сцена çинче куртăмăр. Юрлать те, кирлĕ пулсан ташлать те хайхи. Пиреншĕн, ялта çуралса ӳснĕскерсемшĕн, артист тени пачах урăх тĕнчерен килнĕскер пек туйăнатчĕ те... Кунта вара нумай-нумай çул пĕлнĕ-паллана каччă пултарулăхĕпе куракана тыткăнлать. Ăçтан, мĕнле майпа лекнĕ-ха Владимир Григорьев асамлăх тĕнчине /искусство чăнласах асамлăх мар-и вара?/.**



## Шурă лаша

**– Пĕр вăхăт Элĕк районĕнчи Тавăтри вăтам шкулта вĕреннине кура сан пирки ентеш тесех калатпăр ĕнтĕ...**

– Тасçа та çитнĕ эпĕ. Пĕрремĕш класра Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Аксаринра вĕреннĕ, иккĕмĕшне Çĕрпӳ районĕнчи Чиричкассине кайнă, виççĕмĕшне çав районти – Йĕкĕрвара... Пиллĕкмĕш класран пуçласа чăнласах Тавăтра ăс пухма тӳр килчĕ. Тăххăр-вуннă вара – Элĕкре.

**– Эсĕ ачаллах тĕнче касса çӳренĕ апла – ун чухнех богема пулнă. Кала-ха, тăван тесе шутлакан хăш кĕтесшĕн чуну ытларах тунсăхлать?**

– Паллах, Тавăт ялĕшĕн. Кун çути кăтартнă çывăх çыннăм – аннем Дина Петровна Григорьева – çавăнтан пулнă вĕт. Кӳршĕ яла Шĕнтреше качча тухнă вăл. Эпĕ çак тĕнчене мĕнле килнине каласа кăтартни асра. Çил-тăманлă кун пилĕкĕ касма пуçланă аннен. Элĕке çул çывăх мар. Шурă лаша кӳлсе тухнă вĕсем. Асар-писер çанталăк ахăрать. Лаши юр ăшне кĕре-кĕре ларать тет: е хӳри кăна курăнать, е пĕккй кăна. Çапла çуралнă эпĕ – анне хырăмĕнче шурă лашапа ярăнса пынă май Шурă лаша çулĕнче. Шурă лаша манăн символ пулса тăчĕ тесен те йăнăш мар – ун пекех эпĕ: тарăхтарсан ай! тарăхатăп та! Хайхи усал çанталăкран пĕрре те кая мар. Каярахпа кăмăл пач улшăнать, лăпланатăп та хам аптратăп: “Мĕн туса хутăм?” – тесе кулянатăп.

**– Çапах артист çулне мĕнле майпа суйласа илтĕн-ха? Ача чухне сана сцена çинчен анманнине ас тумастăп-çке...**

– Çуралнă тăрăх витĕм кӳнĕ пулĕ тесе шухăшлатăп. Мĕнлерех çынсем пулнă вĕт пирĕн таврара! Илле Тукташ, Никифор Васанкка, Прохор Емельянов, Александр Артемьев, Аркадий Малов, Зоя Андреева, Борис Марков... “Салампи юрри” халĕ те маншăн – чи юратни. Тавăт тăрăхĕнче пурăнакан тăванăмсем те – Казыкинсен йăхĕ – пултарулăхра паллă. Пурте юрлаççĕ. Аслине, Михал пичине, Вера Кузьмина хăй артиста пыма сĕннĕ, анчах та лешĕ килĕшмен. Алеша Казыкин, тăпри çăмăл пултăр, сцена çине тухмаллискерччĕ. Халĕ вĕсен тăванĕ, çамрăк каччă, йăх ĕмĕтне çапах та пурнăçлама тăрăшнине пĕлтерчĕçха. Анне юрлама ăстаччĕ, чăваш кăларăмĕсене юрататчĕ. Аставатăп, “Ăраскал” пуçлансан радиона ыталаса итлесе ларатчĕ...

Çук, мĕн ачаран артист пулма ĕмĕтленнĕ тесе калаймастăп хам пирки. Эпĕ шкултан вĕренсе тухиччен Шупашкара килсе театра кайса та курман вĕт. Яла пырса кăтартакансене кăна чупнă. Элĕкре 9-мĕш класра вĕреннĕ чухне вара, хам паян та ăнланмастăп – мĕнле майпа? – районти халăх театрне çул тытнă. “Сирĕн кунта редактор ăçта?” – тесе ыйтнă культура çуртне пырса кĕрсен. “Режиссер” теме те пĕлмен вĕт...

Пĕрремĕш роль – чехсем çинчен çырнă спектакльти Шавов сăнарĕ.

Театр пирки чи малтан Вера Кузьминапа калаçнăччĕ. Вăл хальлĕхе набор çуккине каларĕ. Вара эпĕ Мускава хам тĕллĕн кайма тĕв турăм. Çулталăк тăршшĕпе укçа пухрăм – çула тухмашкăн. Тăван мар анне пирки, каярахпа унпа ӳсме тивнĕ пирĕн, начаррине нимĕн те калаймастăп. Укçине те парса тăратчĕ вăл. Анчах та унран ыйтма аван марччĕ – вĕренме кĕреймĕп те намăс пулать вĕт! Çапла апат çиме панă укçана çулталăка яхăн вăрттăн пухса пытăм. Шутласа хутăм – Мускава унталла-кунталла кайса килмешкĕн 24 тенкĕ çитет: çул хакне эпĕ малтанах Шупашкара килсе пăхса кайрăм. 1 тенкĕ – унта апат çиме. Ара, эпĕ документсене парса хăварса çав кунах каялла килме палăртнă вĕт. Ача-пăча... Виçĕ çул тăхăннă костюмпа тухрăм çула. Çак вăхăтра хам тăсăлнă ĕнтĕ, çанăсем кĕскелсе юлнă. Мускава çитсенех малтанах çăвар та хупăнмарĕ-тĕр: Шупашкар пысăк та, анчах та унта!.. Хама кирлĕ института аран шыраса тупрăм. Халăх хĕвĕшет кăна. Мĕншĕн ытла та нумай кунта? Пурте çакăнта вĕренме кĕресшĕннине пĕлсен çăварăм тата ытларах карăлчĕ. Документсене капла кăна йышăнманнине, малтан “прослушка” пулнине пĕлсен пусăм та усăнчĕ. Мĕн япали вăл? Сăвă е юптару вуламалла иккен. Пултарулăха тĕрĕслеççĕ пĕр сăмахпа. Çынсем çулталăкĕ-çулталăкĕпе хатĕрленеççĕ, вĕренме кĕмешкĕн темиçе хутчен те пыраççĕ. Вырăсла шăкăлтаттарса калаçаççĕ. Манăн, ял ачин, мĕне шанмалли пур? Пурпĕр çаврăнса утмарăм – Шурă Лаша мар-и? Библиотека шыраса тупрăм, юптару пăхмасăр вĕрентĕм. Пултарулăх комиссийĕ умĕнче ăна вуласа патăм. Те пăлхантăм – такăнтăм... Çук, телее, çапса хуçмарĕç мана. Акцент пуррине каларĕç, вырăнта вĕренме сĕнчĕç. Çакă та çунат хушрĕ тейĕн. Маларах кайса калам-ха. Театр институчĕн алăкне хам хысран хупиччен каласа хăвартăм: “Эпĕ çакăнта пурпĕр тавранатăп!” Тавăнтăм – 25 çул иртсен, режиссера вĕренме. Хама сĕнӳ панă хĕрарăм сăнне коридорти стенд çинче шыраса тупрăм: Людмила Ставская.

КĔСКЕН

**Владимир хăй вăхăтĕнче Етĕрне районĕнчи Анат Ачак хĕрне Лидăна илме 45/!/ туй арăмĕпе кайнă. Мăшăр хĕрпе ывăл çуратса ӳстернĕ. Настя Чулхулари медицина академийĕнче вĕренет. Шупашкарти 2-мĕш лицейра ăс пухакан Алман та тухтăр пулас ĕмĕтлĕ. Чăваш чунĕллĕ çемье тăван чĕлхепе шăкăлтаттарса калаçать. Çав шутра – хулара ӳснĕ ачисемпе те.**



● ЧĂВАШ ХАЛĂХ АРТИСТКИПЕ ПОЛИНА ЧАМЖАЕВĂПА «ПĔР ТĂВАН ВИÇĔ ХĔР» СПЕКТАКЛЬТЕ.

Киле таврăнсан макăртăм... Маншăн халĕ пурпĕрехчĕ ĕнтĕ. Чăваш патшалăх университечĕн машиностроени факультетне вĕренме кĕтĕм. Çав вăхăтрах театра чупаттăм. Пĕр спектакле, ĕненетĕр-и е çук-и, 20 хутчен, тен, ытларах та, пăхни те пулнă! Артистсемпе хутшăнаттăм. Вĕсемпе пĕрле ташлаттăм та. Ай, сĕмсĕр... Вĕсем кам та эпĕ – кам?

Тăрăшни харама каймарĕ. Çамрăксен театрĕн хушма пултарулăх ушкăнне илчĕç. Сергей Павловпа çулталăка яхăн театртах вырта-тăрса пурăнтăмăр. Унтан иксĕмĕре общежитире пĕр пӳлĕме вырнаçтарчĕç. Шалу 40 тенкĕпе танлашатчĕ. Паллах, ним тума та çитместчĕ çакă. Яланах выçăскер, апат шăршипе тăн çухатса кайса ӳкни те пулнă. “Никама та ан кала çакна”, – ăс пачĕ ун чухне Сергей...

Унтан Щепкин ячĕллĕ училищĕне набор пулчĕ. Унта эпĕ те çаклантăм. Тепĕр Сергейпе пĕр пӳлĕмре пурăнтăмăр – Кувшиновпа. Ах, тарăхтаратчĕ те тепĕр чух, чеескер... “Пăтă лартса яр-ха, эпĕ ывăнтăм”, – тетчĕ. Хура тул пăтти пĕçереттĕм. Писсех çитме пуçласан тăратчĕ те кастрюле... сахăр чăмтаратчĕ. Эпĕ вара çак пăтта сахăр хушнине чăтма пултараймастăп! /Кулать/.

Çапла Мускаври та выçăллă-тутăллă иртрĕ пурнăç. Юрать пирĕштисем çумрахчĕ. Мускавра мана Татьяна Аносова хăйĕн хӳттине илчĕ. Ял ачине выçă вилме памарĕ. Шупашкарта Вера Кузьмина асĕнчен кăлармарĕ. Тĕлĕнеттĕмĕр те, аван марланаттăм та – вăл, СССР халăх артистки, тĕп хулана пыракансенчен ман валли укçа пара-пара яратчĕ...

## Çын çиенрен пуçласа – Кашкăр таран

Тăван театра таврăннăранпа мĕн тĕрлĕ роль калăпламан-тăр – Çын çиенрен пуçласа Кашкăр таранах. Çитмен ял юлман. Пĕрремĕш спектакль вара Вячеслав Оринов лартнă “Аслă ывăл” пулчĕ.

**– Режиссера вĕренме каяс шухăш мĕнле çуралчĕ?**

– Вăт темĕн çитместчĕ... Режиссура вăрттăнлăхĕсене шалтан тĕпчес килчĕ-тĕр. Артиспа танлаштарсан пач урăх професси-çке ку.

**– Паян эсĕ – артист, режиссер, преподаватель, методист...**

– Çапла, театрсăр пуçне Халăх пултарулăх çуртĕнче те ĕçлетĕп тата культура институтĕнче Нина Пининăпа пĕрле кăçал пĕрремĕш хут мобильлĕ театрсен çамрăк ертӳçисене вĕрентсе кăларăпăр. Фестивальсен йĕркелетпĕр, Вера Кузьмина ячĕллĕ Илемлĕ сăмах конкурсĕ регионсен хушшинче иртет. Унăн çĕнтерӳçисене кăçал Республика кунĕнче “Раççей çăлкуçĕсене” хутшăнтарасшăн. Унта та янăратăр чăваш сăмахĕ.

**– Кала-ха, пултарулăх енчен тăранса çитнĕ-и эсĕ е халĕ те çаплипех выçă-и?**

– Артист тени паян укçа тумалли инструмента çаврăнса кайни канăçсăрлантарать... Çĕршывра наци темĕнле программи те пурнăçланать – вĕренӳре, сывлăх сыхлавĕнче, ял хуçалăхĕнче. Культура тытăмĕнче кăна çук наци шайĕнчи аталану программи. Питех те кирлĕ вăл паянхи кун! Халĕ эпир сывалса, çисе тăрантăмăр пулĕ ĕнтĕ – наци программисем пурнăçланнине кура калатăп-ха çакна. Апла тăк – шăпах чун, культура çинчен шухăшлама вăхăт. Театра çӳремест халĕ халăх, хаçат вуламасть... Клубсенче те авă штатра 1 çынна кăна хăварасшăн. Ялта шкул, клуб пулмасан – мĕн юлать? Анăç аталанăвне тĕпе хурса пурнăçа йĕркелесе пыни мĕнпе вĕçленесси куçкĕрет – унта нацилĕхе пирĕн шайра сыхласа хăвараймарĕç. Халĕ каялла тавăрасшăн тапаланаççĕ – пулмасть. Пĕрре çухатнăскерне ăçтан тупăн? Пирĕн те йăхне маннă Йăвана çаврăнас марччĕ. Çак тарана чиперех упраса çитернĕ йăла-йĕркене малашлăх валли те сыхласа хăварасчĕ. Чăнта, юлашки пулăмсен малалла шанчăклăрах пăхма хăват хушаççĕ. Хамăрăн культура министрĕ пирки-ха сăмахăм. Пирĕн тăрăхра пурăнакансем çынна сăмах тăрăх мар, ĕçе кура хак параççĕ. Мухтаннипе-каппайланнипе инçе каяймăн. Акă пирĕн ведомство тилхепине Константин Яковлев алла илнĕренпе вăхăт нумай та иртмерĕ – мĕн чухлĕ ырă ĕç турĕ. Шупашкарти Трактор тăвакансен культура керменĕн ертӳçине улăштарма хал çитерчĕ – çурта юсав ĕçĕсем ирттерсе кĕске вăхăтрах йĕркене кĕртрĕç. Чăнласах кермен теме пулать халĕ. Унтан та ытла, чăваш тăрăхĕнче 70 çул /!/ тăсăлнă ыйтăва туххăмрах татса пачĕ Константин Геннадьевич – Çамрăксен театрĕ тинех хăйĕн çуртĕнче спектакльсем кăтартма пуçлĕ. Мĕн тери савăнтăмăр çакăншăн!

Чăваш – тĕлĕнмелле ырă кăмăллă халăх. Хам чăваш пулнишĕн питĕ савăнатăп. Эпĕ – ырă халăх тĕпренчĕкĕ. Ырă тунине вара ырăпах тавăрмалла. Артистра ĕçлесе те пулин çак тĕллеве пурнăçласчĕ манăн.

**– Хăвăн чи пысăк ăнăçăву тесе мĕне калама пултаратăн?**

– Чи кирли маншăн – çынна усал туманни. Шухăшăма кусран пăхса тӳррĕн калама хăраманни. Çапла вĕрентнĕ мана. Чăн та, çакăншăн нумай чухне патакĕ те лекет, анчах та чунра суя çук.

**– Паян эсĕ – экваторта. Кала-ха: хысалалла пăхсан тата малалла тинкерсен мĕн куратăн?**

– Пĕлетĕн-и, малалла та, хысалалла та пăхас килмест, ту тăррине хăпарма та, тинĕс тĕпне анма та кăмăл çук. Çĕр тăрăх кăна – пĕчĕккĕн, лăпкăн мăштăртатса – çӳрес килет. Анкартине тухса çутçанталăкпа, паянхи самантпа киленес килет. Асанне калани аса килет: “Нумай та юлать, сахал та çитет...”

**– Чунунта çапах та темĕнле пăлхав, канăçсăрлăх яланах тапса тăнăн туйăнать. Тулли телейлĕ пулма мĕн çитмест сана?**

– Вăхăт. Талăкра тепĕр 3-4 сехет пулсан мĕн тери лайăхчĕ – канмалăх, лăпланмалăх...

**– Çакăн пек катастрофа шайĕнче вăхăт çитмен лару-тăрура та пирĕн пата килсе каласса ларма май тупнăшăн тавах сана. Атя-ха вулакана тата куракана иксĕмĕр пĕрле санăн пултарулăх кăçне йыхравлар. Пултарулăху пирки ятарласах шухăшласа сăмах хускатмарăм – эсĕ халăх умĕнчи çын, вулакан-куракан хăй хаклатăр. Вĕрентекен рольне те лайăхах калăплатăн – Шупашкарта, Мускавра, ГИТИС таран, ăс пухаççĕ эсĕ çул тĕлленĕ çамрăксем. Манăн вара çынсем сан çинчен пĕлсех кайманнине вулакан патне çитерес килчĕ.**

– Хаваспах.

**Рита АРТИ хатĕрленĕ.**

ГРИГОРЬЕВСЕН çемье архивĕнчи сăнӳкерчĕксем.

ЙЫХРАВ: **Кăрлач уйăхĕн 24-мĕшĕнче Трактор тăвакансен культура керменĕнче Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Владимир Григорьев пултарулăх каçне ирттерет. Пурне те пырса курма чĕнетпĕр.**

ĔÇЛĔ ТĔЛПУЛУ

# Тавралăха хăтлăлатассишĕн

**Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев федерацин çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕпе Сергей Донскойпа тĕл пулнă. Вĕсем Экологи çулталăкĕнче ирттермелли мероприятисене сӳтсе явнă.**

Михаил Васильевич регионта каяшсене тирпейлемелли тата тĕп тумалли тытăм йĕркеленни çинчен каланă. Чăваш Республикинче экологи хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă темиçе проект пурнăçа кĕнĕ. Çĕнĕ Шупашкарти тасатакан сооруженисен реконструкцине тата хытă каяшсен çĕнĕ полигонĕн строительствине РФ Правительстви çирĕплетнĕ мероприятисен планĕпе килĕшӳллĕн малалла тăсĕç. Питтукассинчи каяшсене тăкмалли вырăна рекультивацилессине федераци программине кĕртнĕ. Ун валли 380 миллион тенке яхăн уйăрма палăртнă.

Çĕнĕ Шупашкарти тасатакан биологи сооруженийĕсен реконструкцине вĕçлени Атăла юхтарса кăларакан каяш шывсен виçине 100 хут пĕчĕклетĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев 2019 çулта Шупашкар 550 çул тултарасси, 2020 çулта Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитесси çинчен аса илтернĕ май тавралăха хăтлăлатас тĕлĕшпе нумай ĕç тумаллине палăртнă.

Сергей Донской проектсем пурнăçланнипе паллашмашкăн кăçалах республикăна çитсе курма кăмăл тунă.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

АЧАЛĂХ

# Хĕрарăм пурнăç суйлать

**Кăрлач уйăхĕн 16-мĕшĕнче ĕçлĕ çулçӳревпе Мускавра пулнă май ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев РФ Президенчĕ çумĕнчи Ача прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйпа Анна Кузнецовăпа тĕл пулнă.**

Икĕ ен регионта çемьесене пулăшу кӳрес çăмăллăх программисем епле пурнăçланнине сӳтсе явнă. Пирĕн республика ача çуралас енĕпе çĕршывра малтисенчен пĕри иккенне те палăртмалла. Тăваттăмĕш çул халăх йышĕ ӳсет. Ача-пăча вилнĕ тĕслĕх сахаллипе те палăратпăр.

– Аборт тăвакансен йышĕ чакни, пепкене кун çути парнелеме кăмăл тунă хĕрарăмсен шучĕ ӳсни кăмăллă. Хĕрарăм пурнăç суйлани питĕ пĕлтерĕшлĕ, – тенĕ Анна Юрьевна.

Чăваш Енре нумай ачаллă çемьесем те йышланнă. Паян республикăра кунашкал 11529 çемье. Тăлăх ачасемпе ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнисене çемьесене вырнаçтарасси те аван пурнăçланса пырать.

Ача прависен уполномоченнăйĕ РФ Президенчĕ Федераци Канашне янă Çырура çемье институтне çирĕплетме хушнине пурнăçланă май республикăра Ача прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйĕн институтне чĕртсе тăратасси пĕлтерĕшлине каланă.

– Института чĕртсе тăрататпăрах. Ку ыйтăва ЧР Патшалăх Канашĕн çывăхри ларăвĕнче сӳтсе явма палăртнă, – тенĕ Михаил Васильевич.

Ку тивĕçе малашне кам пурнăçлас ыйтăва пĕрле татса пама калаçса килĕшнĕ икĕ ен. Малашнехи ĕçе те канашласа пурнăçлĕç.

Анна Юрьевна республикăра кăçал Амăшĕпе Ашшĕн çулталăкне ирттерме палăртнине те ырласа йышăннă.

**Татьяна НАУМОВА.**

ТУРИЗМ

# Хăнасене хапăл

**Çак эрнере республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев "Пулас Чăваш Ен: туризмпа сервиса аталантарасси" темăпа йĕркеленĕ сессие хутшăннă. Мероприятие "Гарден Спа Отель" хăна çурчĕсемпе ресторан комлексĕнче йĕркеленĕ.**

Регион Пуçлăхĕ Чăваш Енре туризма аталантарма пĕтĕмпех пуррине палăртнă. Сăмахран, юлашки çулсенче инфратытăма аталантарас, районсемпе хуласене хăтлăлатас тĕлĕшпе нумай ĕçленĕ, çак тĕллевпе темиçе миллиард тенкĕ уйăрнă. Михаил Васильевич сервиса лайăхлатма, хăна çурчĕсен пурлăхпа техника базине çĕнетме, ют çĕршывсен опычĕпе усă курма сĕннĕ.

ЧР культура министрĕ Константин Яковлев республикăри турист отраслĕн ĕçĕпе паллаштарнă. Иртнĕ çул пирĕн тавралăхпа паллашакансен йышĕ 7 процент ӳснĕ. Çавна май турфирмăсем 1 миллиард тенкĕ тупăш илнĕ. Çакă 2013 çулпа танлаштарсан икĕ хут ытларах.

Константин Геннадиевич республикăра информаципе культура центрĕ йĕркеленĕшĕн Чăваш Ен Пуçлăхне тав тунă. Вăл экскурси программисене аталантарма май парать.

Сессие хутшăнакансем хăйсен проекчĕсемпе, экскурси программисемпе паллаштарнă. Регион Пуçлăхĕ авторсен шухăшĕсене ырласа йышăннă, вĕсене пурнăçа кĕртме инвесторсем тупмалли пирки каланă.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**



ХАКСЕМ

# Какай, сĕт-çу...

**ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин Правительство членĕсемпе тата влаç органĕсен ертӳçисемпе эрнесерен ирттерекен канашлура апат-çимĕç хакне пырса тивекен ыйтăва та хускатнă. ЧР Экономика министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Ольга Ланцова республика социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕç чи йӳнĕ регионсен йышне кĕнине пĕлтернĕ.**

– Сăмахран, ĕне тата сысна какайĕ республикăра йӳнĕреххисенчен пĕри, – тенĕ вăл.

2016 çулхи раштав уйăхĕнче хакланнă апат-çимĕç йышĕнче – сĕт продукцийĕпе çĕрулми. Апла пулин те хаксем ытти регионтипе танлаштарсан майĕпен хăпараççĕ-мĕн.

Иван Моторин ЧР Пуçлăхĕ сĕт-çу хакĕн ыйтăвне куçран вĕçертменнине пĕлтернĕ. Çавăн пекех ведомствăна Федерацин антимонополи службипе пĕрле хаксене сăнасах тăма ыйтнă. Сĕт-çу регион тулашне чылай кайнине шута илсе çак кăтартăва пĕчĕклетмеллине палăртнă.

**Анна НИКОЛАЕВА.**

СĂМАХ ПАРĂР-ХА

# Кĕнеке парнелемелли кун çывхарать

**Марина ТУМАЛАНОВА**

**Шкулта кашни чĕрĕке лайăх паллăсемпе вĕçлеме тăрăшаттăмăр. Çакăншăн пире кĕнеке парнелетчĕç. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче шкул директорĕн аллинчен кĕнеке илни мĕнешкел сумлăччĕ пирĕншĕн. Пĕррехинче кĕтмен-туман çĕртен пăтăрмаха лекни асра. Эпĕ ун чухне тăваттăмăш класа куçнăччĕ. Шкул линейкинче кĕнеке патне чĕнчĕç. Вырăнтан хускаличчен тепĕр хĕрача директор патнелле çул тытрĕ. Пĕрремĕш класа килнĕскерпе пĕрешкел ятлă, хушаматлă иккен эпир. Çакна ăнланса çур çултан каялла таврăнчĕ вăл.**

**Кĕнекепе туслă ачан тавракурăмĕ аталанса пынине шута илсе хăш-пĕр шкулта, ахăртнех, çак йăлана халĕ те тытса пыраççĕ. Çапах пирĕн пурнăçа куллен тенĕ пекех çĕнĕлĕх кĕрет. Пирĕн ачасем пĕлӳ илекен шкулта, сăмахран, вĕренӳре ĕлкĕрсе пынăшăн кĕнеке мар, сертификат параççĕ.**

**Ачасен çуралнă кунне йышпа паллă тума хăнăхнă. Вунă çул тултариччен тĕпренчĕксене тантăшĕсем кĕнеке те парнелекенччĕ. Ыйту-хуравлă пысăк энциклопедипе, тĕслĕхрен, килти ĕç тунă чухне хушма литература вырăнне усă куратпăр. Сăнатăп та – вуннăран иртнĕ ачасем япала вырăнне укçа пама пуçларĕç.**

**Эпир, ашшĕ-амăшĕ, класа пуçтарăнсан черетлĕ уявра ачасем валли мĕнле парне хатĕрлемелли тавра сăмах пуçаратпăр. Чăнах, мĕнпе тупма пулать вĕсен кăмăлне? Кĕçĕн класра вĕреннĕ вăхăтра пурне те кĕнеке илсе параттăмăр. Халĕ, чылайăшĕн шухăшĕпе, çакнашкал парне ача-пăчана çырлахтармасть.**

**"Пилĕкри ывăлăм аслисене курса планшетшăн макăрать. Вăл та вăйă вылясшăн. Мăнаккăшĕ ăна та планшет илсе пачĕ", – каласа кăтартать юлташ. Унăн, халех ăслă техника тыткăнне лекнĕскерĕн, кайран кĕнеке вулас шухăш тĕвĕленĕ-ши?**

**Пĕчĕк ачасенех çĕнĕ йышши телефон кирлĕ. Квадрокотершăн, пультпа хускалакан машиншăн, калаçакан пуканешĕн ытларах савăнаççĕ вĕсем. Çав хатĕрсене хамăрах, çывăх çыннисем, укçа шеллемесĕр илсе паратпăр. Çавăнпах кĕнеке парнелекен сахалланса пырать. Апла тăк ăна тивĕçлипе хаклама пĕлместпĕр. Кайран хамăрах ачасем çителĕксĕр вуланăшăн ӳпкелешетпĕр.**

**Çав вăхăтрах кĕнеке çӳлĕкĕсем илемлĕ хуплашкаллă литературăпа, тĕрлĕ словарьпе, энциклопедипе йăтăнаççĕ. Мĕн кирли – йăлтах пур. Телее, кĕнеке лавккине тăтăш кĕрсе тухакан та йышлă. Вĕсен, ахăртнех, килте кĕнеке нумай. Вуласа тухсан мĕн тумалла унпа? Çĕнни валли те вырăн кирлĕ.**

**Кĕнеке парнелемелли кун пирки илтнĕ-и эсир? Уява нарăсăн 14-мĕшĕнче паллă тăваççĕ. Чи малтанах, ăна кĕнеке сумне ӳстерес, вăл технологи ĕмĕрĕнче те хăйĕн хакне çухатманнине кăтартас тĕллевпе шухăшласа кăларнă.**

**АПШри "Ытарайми ача-пăча кĕнеки" сайт йĕркелӳçи Эмми Бротмур сĕннĕ ăна. Пĕчĕк ывăлĕн витĕмĕпе çуралнă çак шухăш. "Мĕншĕн пĕр-пĕрне кĕнеке парнелемелли уйрăм кун çук-ши?" – кăсăкланнă арçын ача. Амăшĕ, паллах, çакна шута илмесĕр пултарайман.**

**Кĕнеке парнелемелли куна 2012 çулта пĕрремĕш хут паллă тунă. Тепĕр 2 çултан тĕнчен 30 ытла çĕршывне, çав шутра Раççее те, çитнĕ çак уяв.**

**Кăçал Пĕтĕм Раççейри "Кĕнекене юратса парнелĕр" акцие Чăваш Республикинче пурăнакансем те хутшăнма пултараççĕ. Культурăпа искусство ĕçченĕсен "Вулакана çитĕнтеретпĕр" ассоциацийĕ йĕркелет ăна. Республикăри ача-пăча тата çамрăксен библиотекинче, район тĕп библиотекисенче кĕнеке пуçтарма пуçланă ĕнтĕ. Нарăс уйăхĕн 12-мĕшĕччен кашнийĕнех çак ĕçе хутшăнма май пур. Нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче вара çав кĕнекесене республикăри ача-пăча библиотекисене парнелĕç. Апла тăк кĕнеке фончĕ пуянланĕ.**

**Çак кунах республикăри ача-пăча тата çамрăксен библиоткинче кĕнеке парнелекенсен ярмăркки иртĕ. Вулама юратакансен пĕр-пĕринпе кĕнекесемпе ылмашăнма май килĕ. Çакăнтах ачасем валли çыракансемпе тĕлпулу иртĕ.**

**Çапах нарăсăн 14-мĕшĕнче кăна мар, ытти уявра та кĕнеке парнелени вырăнлă, сумлă.**

# янă Çырупа паллаштарчĕ

явăçтарас тесен вĕсене тивĕçлĕ шалу тӳлемелле. Ку енĕпе ĕçлеме тытăннă ĕнтĕ – юлашки 5 çулта ял хуçалăхĕнчи ĕç укçи шайĕ экономикăри вăтам ĕç укçин 56 процентĕнчен пуçласа 72 процентне çити пысăкланнă. Ку аван ӳсĕм, анчах та çителĕксĕртерех!

Производство тухăçлăхĕ пысăк предприятисенче хăйсен ĕçченĕсене лайăх шалу тӳлеççĕ те ĕнтĕ. Сăмахран, «Çĕрпӳ беконĕнче» ĕç укçин вăтам виçи 27,4 пин тенкĕпе, «Ольдеевская» агрофирмăра – 26,8 пин тенкĕпе, «Çĕр улмие мухтав» агрофирмăра – 23,7 пин тенкĕпе танлашать.

**Ял хуçалăх ĕçченĕсен ĕç укçи ял хуçалăх таварĕсен хальхи хакĕсем тавра йĕркеленнĕ лару-тăрăва шута илсен республикăри вăтам кăтартуран кая мар пулмалла.**

Аграрисене савăнтарас тетĕп. Кăçалтан пуçласа патшалăх паракан 54 пулăшу мелне çичче пĕрлештернĕ.

Патшалăх паракан пулăшу мелĕсене ансатлатни бюджет укçи-тенкине вĕсене илсе тăракансем патне васкавлăн çитерме тата субсиди уйăрса парас ĕç тухăçлăхне пысăклатма пулăшать.

Çавăн пекех эпир ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсем кредит укçи-тенкипе усă курма пултармалли майсене ансатлатас енĕпе панă сĕнӳсене те шута илнĕ. Çăмăллăхлă кредитсем уйăрса памалли çĕнĕ меле ĕçе кĕртсен ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсемшĕн, заем илекенĕн ят-сумне кура, процент ставки çулталăкне 5 процентран ытла пулмасть, çакă коммерци кредичĕсемшĕн тӳлекен ставкăран 2-3 хут пĕчĕкрех. Банксем çав ставкăсемпе кредитсем уйăрса пама тытăннă та ĕнтĕ.

**Иртнĕ çул Чăваш Енри строительство отраслĕшĕн ансатах пулмарĕ. Эпир çакна тӳррĕн йышăнатпăр. Республикăра пурăнмалли çурт-йĕр строительствин хăвăртлăхĕсем 24 процента çити сахалланчĕç, çакна пĕри харпăр хăй валли тăвакан çурт-йĕр тăвас ĕç калăпăшĕ 32 процент чухлĕ чакни сăлтавларĕ.**

**Çав хушăрах пирĕн ӳсĕм валли резервсем пур. Республика Правительстви пурăнмалли çурт-йĕр строительствине аталантарма лайăх майсем туса парать.**

Проблемăллă объектсем пуласран асăрхаттарас тĕллевпе пая кĕрсе тăвакан нумай хваттерлĕ çуртсен строительствине мониторинг мелĕпе тăтăшах асăрхаса тăрассине йĕркеленĕ.

Республикăра пурăнакан пирĕн чылай çынна çурт-йĕр ыйтăвне татса пама патшалăх пулăшăвĕ кирлнине эпир лайăх ăнланатпăр.

Пĕлтĕр 5 672 çемье патшалăхран 3 миллиарда яхăн тенкĕлĕх пулăшу илнĕ.

Чăваш Республики Раççей Президенчĕ лартнă тĕллеве ăнăçлăн пурнăçларĕ тата 2010 çултан пуçласа пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма кирлĕ çынсен шутĕнчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин 5 878 ветеранне çурт-йĕрпе тивĕçтерчĕ. Çав тĕллевсем валли 5,6 миллиард укçа-тенкĕ уйăрнă. Асăннă программăна кăçал та малалла пурнăçлатпăр.

2017 çул çынсене ишĕлекен çурт-йĕр фондĕнчен урăх вырăна пурăнма куçармалли программăпа тата тимлĕрех ĕçлеме хистет. Хальхи вăхăтра 9 пин те 570 çынна е куçарма палăртнисен 74 процентне урăх вырăна пурăнма куçарнă.

**Хисеплĕ ĕçтешсем!**

**Çул-йĕр тытăмне аталантарасси пирĕн тĕп тĕллевсенчен пĕри шутланать, мĕншĕн тесен вăл Чăваш Ен экономикин аталанăвĕ тата çынсем хăйсене пурнăçра мĕнлерех туйни çине тӳррĕмĕн витĕм кӳрет. Эпир ытти регионпа çыхăнтаракан транспорт çул-йĕрне лайăхлатас тесе тăрăшатпăр.**

Кăçал Симферополь, Ĕпхӳ, Самар тата Санкт-Петербург хулисене вĕçевсем йĕркелеме авиакомпанисене явăçтарас ĕç малалла пурнăçланмалла.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Çĕршыв Президенчĕ Владимир Путин 2017 çула Экологи çулталăкĕ тесе пĕлтерчĕ. Чăваш Ен Правительстви экологи хăрушсăрлăхне ӳстерессi, ешĕл зонăсен йышне пысăклатасси çине уйрăмах тимлĕн пăхать. Пирĕн тĕллев – республикăна пурăнма чи лайăх вырăн туса хурасси!

Экологи тĕлĕшĕнчен питех те пĕлтерĕшлĕ инвестици проекчĕсене пурнăçлани ку тĕлĕшпе тунă пысăк утăм шутланать. Раççейри хальхи вăхăтри чи çĕнĕ йăлари хытă каяшсен полигонне тунине, Çĕнĕ Шупашкарти биологи мелĕпе тасатакан сооруженисен комплексне юсаса çĕнетнине, Шупашкарти «Заовражная» шыв тасатакан станцире юшкăна тирпейлемелли сооруженисен комплексне йĕркеленине пула çут çанталăка кӳрекен сиен шайне палăрмаллах чакарма май килчĕ.

Пирĕн пуçарусене федераци шайĕнче ырласа йышăннă.

Республикăн экологи хăрушсăрлăхне тивĕçтерес енĕпе çут çанталăкăн хаклă объекчĕсене упраса хăварни тата уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсене аталантарни пысăк пĕлтерĕшлĕ шутланать.

2017 çулта регион шайĕнчи тата 4 уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсене Шупашкар хулин Атăл леш енче, Элĕк, Пăрачкав, çĕмĕрле тата Елчĕк районĕсенче туса хума тĕллев лартатăп.

Хисеплĕ депутатсем!

Спорт тата сывă пурнăç йĕрки пирĕн обществăн ырлăхĕн никĕсĕ пулса тăраççĕ, апла пулсан патшалăх политикин тĕп çул-йĕрĕ те. Ку манăн принциплă позици.

Халăха физкультурăпа тата спортпа тăтăшах хутшăнтарас енĕпе Чăваш Ен Раççей регионĕсен пĕрремĕш теçеткине кĕрет.

Палăртса хăварас тетĕп: эпир физкультурăпа спорта аталантарма, спорт инфратытăмне хывакан инвестицисене шута илмесĕр, çуллен 700 миллион тенкĕ ытла укçа-тенкĕ уйăратпăр. Çавна пула республикăри 34 пин ытла ачапа çула çитмен çамрăк вăй-халне спорт шкулĕсенче туптать.

Пирĕн спортсменсен пысăк çитĕнĕвĕсем спортра пуçламăш утăм тăвакан арçын ачасемпе хĕрачасемшĕн ырă тĕслĕх шутланаççĕ.

Юлашки çавнашкал пархатарлă çитĕнӳсенчен пĕри – Татьяна Акимовăн биатлон енĕпе Тĕнче кубокĕнчи çĕнтерĕвĕ.

2016 çулта пирĕн республикăн çĕр ытла спортсменĕ тĕнчери ăмăртусене хутшăнса Раççейĕн пĕрлештернĕ командин пухмачне тĕрлĕ пахалăхлă 80 яхăн медальпе пуянлатнă. Кашни çав медале спортсменсем хăйсен пултарулăхне тата тăрăшулăхне, вĕсен тренерĕсен ăсталăхне пула çĕнсе илнĕ. Паян пирĕн 156 спортсмена 23 спорт тĕсĕ енĕпе Раççей Федерацийĕн пĕрлештернĕ командисен кандидачĕсен списокне кĕртнĕ. Ку питĕ аван!

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Чăваш Ен культури – чăваш çĕрĕ çинче мĕн авалтан туслăн та килĕштерсе пурăнакан 128 наци представителĕн хăйневĕр йăли-йĕркипе авалхи еткерĕн çураçуллă пĕрлĕхĕ.

Пĕлтĕр Чăваш Ен халăхĕсен съездне ирттерни тата Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан халăх представителĕсен Ассамблейине туса хуни республикăн этнокультура пурнăçĕнчи паллă пулăм пулса тăчĕ. Халăх пĕрлĕхĕн кунĕнче Халăхсен туслăхĕн çуртне уçни çак ырă пуçарусен пархаталă тăсăмĕ пулĕ.

Эпир ялта культура çурчĕсем тăвас ĕçе пĕлтĕр çĕнĕрен пуçарса ятăмăр. Çĕрпӳ тата Елчĕк районĕсенчи çĕнĕ клубсем хăйсен пĕрремĕш хăнисене йышăнчĕç те ĕнтĕ. Кăçал тата 4 культура çурчĕ туса хута яма, 31-шне юсама, 25 клуба вара хальхи оборудованипе тивĕçтерме палăртнă.

2019 çулта пирĕн чаплă шĕкĕр хуламăр – Шупашкар – 550 çул тултарать. 2020 çулта вара Чăваш автономийĕ 100 çул тултарнине паллă тăватпăр.

Хаклă ентешсем!

Пулни асра – пуласси ăсра!

Нумай çулсем хушши туптаннă Чăваш Ен пуянлăхне тата илемлĕхне эпир тивĕçлĕ ӳстерсе пыратпăр.

Сывă пултăр Чăваш Республики – пурăнма хăтлă регион!

Итленĕшĕн пысăк тав.

*Çырăвăн тулли варианчĕпе "Хыпарăн" кăрлач уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухакан 9-мĕш номерĕнче паллашма пулать.*

ПИЧЕТ КУНĔ

# Сăмах вăйĕпе çынсене пулăшмалла



**Раççей тата Чăваш пичет кунĕн уявĕнче сăмах ăстисем Чăваш патшалăх филармонийĕнче пуçтарăнчĕç. Хăнасене аслă шкулта вĕренекен пулас журналистсем кĕтсе илчĕç. Вĕсем валеççе панă кĕсье хунарĕсем куракансен залне çăлтăр çутиллĕ лапама çавăрма пулăшрĕç. Çакă ĕçе чунран парăннине, çак çула ахальтен мар суйласа илнине ăнланса илме пулăшрĕ.**

Фойерех уяв кăмăлĕ хуçаланчĕ. Морис Яклашкин ертсе пыракан Чăваш патшалăх академи симфони капелли хăйĕн пултарулăхĕпе тыткăнларĕ. Республикăра тухса тăракан хаçат полосисемпе илемлетнĕ колоннăсем çине салам сăмахĕсем çырса хăварма май килчĕ. Ятарласа уйăрнă вырăнта чылайăшĕ сăн ӳкерĕнчĕ. Чăваш кĕнеке издательствипе Раççей почти йĕркеленĕ куравпа кăсăклансах паллашакан чылайăнччĕ.

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пичет ĕçченĕсене уяв ячĕпе саламланă май сăмах хăватне çынсен ырлăхĕшĕн усă курмаллине палăртрĕ. Массăллă информаци хатĕрĕсенче хăйсен ĕçне тата çĕршыва юратакан çынсен ăсталăхне кăтартма май пурри çине пусăм турĕ вăл. Хыпар саракансем тăнăçлăха сыхласа хăварма, лару-тăрăва тĕрлĕ енлĕ кăтартма, тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тума пулăшаççĕ. Михаил Васильевич çĕнĕ çĕнтерӳсемпе çитĕнӳсем тума ăнăçу сунчĕ.

ЧР информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ Александр Иванов пичет кăларăмĕсен тиражĕсене упраса хăварма тĕрлĕ ĕç тунине палăртрĕ. Çак çурçуллăхра вулакансен йышне ӳстернĕ кăларăмсен шутĕнче «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата асăнса хăварчĕ вăл. Министр уява килнисене республикăри тĕп мероприятисене вăхăтра тата анлă çутатнăшăн тав турĕ. Журналистсем республика тата Раççей шайĕнчи конкурссене хастар хутшăннине, мала тухнине палăртрĕ Александр Степанович.

Пичет ĕçченĕсене çавнашкалах ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Валерий Филимонов, Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн Чăваш Енри уйрăмĕн секретарĕ Николай Малов, Чăваш журналисчĕсен союзĕн председателĕн çумĕ Анатолий Данилов тата ыттисем саламларĕç.

Уявра ĕçре палăрнисене тĕрлĕ наградăпа чысларĕç. «Хыпар» Издательство çурчĕн система администраторĕ Нина Иванова ЧР Пуçлăхĕн Тав çырăвне, «Хресчен сасси» хаçат редакторĕ Валентина Петрова ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин Хисеп хутне тивĕçрĕç. Коррупципе кĕрешес енĕпе йĕркеленĕ конкурсра çĕнтернĕ «Хыпар» хаçатăн политика, вырăнти хăйтытăмлăх пайĕн редактарне Николай Коновалова тата Ĕç çыннин çулталăкне пĕтĕмлетсе ирттернĕ конкурсра мала тухнă социллă пурнăç пайĕн тишкерӳçине Роза Власовăна Дипломсемпе хавхалантарчĕç.

Чăваш наци телерадиокомпанийĕн радиохыпарлав редакторне Владимир Егорова тата «Чăваш Ен» Чăваш патшалăх телерадиокомпанин «Чебоксары ТВ» студин шеф-редакторне Ольга Петровăна – Çемен Элкер премине, «Çамрăксен хаçачĕн» штатра тăман корреспондентне Альбина Любимовăна – Николай Никольский премине, Патăрьел районĕн «Авангард» хаçачĕн экономика пайĕн редакторне Ольга Павловăна Леонид Ильин премине илме сцена çине чĕнчĕç.

Асра юлнă уяв саманчĕсем çанă таврăса ĕçлеме, çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Василий КУЗЬМИН сăнӳкерчĕкĕ.

ХӲТЛĔХ

# Ачаллă çемьесене – хушма пулăшу

**Пĕлтĕр Чăваш Енре федерацин Амăшĕн капиталĕн программи тăрăх ачаллă çемьесене патшалăх пулăшăвĕ 3,7 миллиард тенкĕлĕх панă.**

Экономика тĕлĕшĕнчен кăткăс вăхăтра Амăшĕн капиталĕ шутĕнчен пĕр хут тӳлени сисĕмлĕ пулăшу пулчĕ паллах. Пенси фончĕ 2016 çулта ăна икĕ тапхăрпа уйăрчĕ: пĕрремĕш кварталта – 20 пин, иккĕмĕш çур çулта – 25 пин тенкĕ. Çулталăкра 19 пин çын 450 пин тенкĕ илнĕ. Чылайăшĕ ыйтăва электронлă мелпе çитернĕ.

Амăшĕн капиталĕн укçипе пĕлтĕр пурăнмалли условисене 8 пин çемье лайăхлатнă, 600-шĕ аслă ачисен вĕренĕвĕшĕн тата кĕçĕннисене ясли-садике çӳретнĕшĕн тӳленĕ.

Çемье капиталне тăкакламалли çĕнĕ мелпе – сусăр ачана социаллă адаптаци памашкăн тата обществăна интеграцилемешкĕн пулăшусемпе таварсем туяннине саплаштарас тата амăшĕн пулас пенсине ӳстерес тĕллевпе – усă курма палăртса ыйту паракан пулман-ха.

Амăшĕн капиталĕн сертификатне пĕлтĕр Чăваш Енри – 8 пин ытла, федерацин патшалăх программи 2007 çулта ĕçлеме тытăннăранпа 75 пин çемье илнĕ. Вĕсен çуррийĕ хушма пулăшу нухратне пĕтĕмпех е пĕр пайне 19 миллиард тенкĕлĕх тăкакланă.

Кăçал çак капитал 453026 тенкĕпе танлашать. Асăннă программа вăйне çухатиччен икĕ çултан катăлчĕ: унăн ирĕкне илмешкĕн çемьери иккĕмĕш е ун хыççăнхи тăпренчĕке 2018 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕччен çуратмалла е усрава илмелле. Сертификатлă пулмалли тата унăн укçипе хуçаланмалли вăхăта вара чикĕлемен.



## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Купăстапа йӳçкăшман



**1 килограмм купăста, 2 кишĕр, 2 пылак пăрăç, 2 йӳçкăшман, чили пăрăç, 2-3 шăл ыхра кирлĕ.**

**Маринад валли 100 миллилитр тип çу, 1 чей кашăкĕ уксус, 2 апат кашăкĕ тăвар, 4 апат кашăкĕ сахăр хатĕрлемелле.**

1 литр шыва тип çу, уксус, тăвар, сахăр ямалла. Çак хутăша вĕреме кĕртсе сивĕтмелле. Купăстана, чили пăрăçа, ыхрана вĕттĕн турамалла. Кишĕре теркăламалла. Пылак пăрăçпа йӳçкăшмана пĕрчĕлесе касмалла. Пахчаçимĕçе маринадпа пăтратса сивĕтмĕше лартмалла.

### «Юр пĕрчи» салат

**4 симĕс панулми, пĕсернĕ 6 çăмарта, 300 грамм сыр, пуçлă 3 сухан, майонез кирлĕ.**

Сухана вĕттĕн турамалла. Панулмие, сыра, çăмарта саррипе шуррине уйрăммăн теркăламалла. Салата сийлесе /сухан – панулми – сыр – çăмарта сарри – çăмарта шурри/ хăпартмалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле.

### Кăмпапа, куккуруспа

**250 грамм краб патакĕ, 400 грамм шампиньон, 3 çăмарта, пуçлă 1 сухан, 3 апат кашăкĕ куккурус, 3 апат кашăкĕ майонез, 3 апат кашăкĕ тип çу, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Пĕçернĕ çăмартана – тăватталласа, сухана – вĕттĕн, кăмпана – çурма çаврашкан, краб патакне çаврашкан турамалла. Кăмпапа сухана тип çупа ăшаламалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла, тăвар, пăрăç сапмалла.

### Аçтăрхан мăйăрĕпе хура слива торчĕ

**3 стакан çăнăх, 200 грамм услам çу, 8 çăмарта сарри, 2 стакан сахăр, 1 чей кашăкĕ кăпăшлантаракан хутăш, 2 апат кашăкĕ хăйма кирлĕ.**

**Крем валли 500 грамм хăйма, 200 грамм услам çу, 0,5 стакан сахăр, 500 грамм хура слива, 2 стакан аçтăрхан мăйăрĕ хатĕрлемелле.**

Çăмарта саррине сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла, хăйма, услам çу, çăнăх, кăпăшлантаракан хутăш ямалла. Чустана 6 пая уйăрмалла. Йĕтĕрлесе духовкăра пĕçермелле.

Шӳтернĕ хура сливăна, мăйăра комбайнпа вĕтетмелле. Хăймана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла, хура сливăпа мăйăр хушмалла.

Кашни корж çине 1 сантиметр крем хурса торт пуçтармалла. Çиелтен мăйăр сапма юрать.

### Тăпăрчпа панулми çаврашки

**200 грамм тăпăрч, 100 грамм услам çу, 2 апат кашăкĕ сахăр, 1 панулми, 0,5 чей кашăкĕ корица, лимон сĕткенĕ, çăнăх кирлĕ.**

Çемçелнĕ услам çăва тăпăрчпа, сахăрпа, çăнăхпа пăтратмалла. Хуппинчен тасатнă панулмие тăваткаллаbackasмалла, лимон сĕткенĕ сирпĕтмелле, корица сапмалла. Унтан ăна чустана хушмалла. Çак хутăшран хулăн икерчĕ майлă çаврашкасем тумалла, кашнине уйрăммăн сахăрпа йăвалламалла. Вĕсене 20 минутлăха духовкăна лартмалла.

### Кальмарпа рис

**500 грамм кальмар, 1 стакан рис, пуçлă 2 сухан, 3 апат кашăкĕ услам çу, 2 апат кашăкĕ çăнăх, 100 миллилитр шĕвĕ хăйма, петрушка, авăртнă пăрăç, тăвар кирлĕ.**

Риса тăвар хушнă шывра çурма пĕçерсе сăрхăнтармалла. Вĕттĕн туранă сухана тип çупа ăшаламалла.

Туранă кальмара услам çупа 2-3 минут пăшăхламалла, тăвар, пăрăç сапмалла.

Риса кальмарпа, суханпа пăтратмалла, шĕвĕ хăйма, услам çу ямалла. Çак хутăша хупласа пĕçермелле. Сĕтел çине лартиччен вĕтетнĕ петрушка хушмалла.

### Çăмарта хăпартăвĕ

**4 çăмарта, 0,5 стакан шĕвĕ хăйма, 3 апат кашăкĕ услам çу, тăвар, петрушка, кетчуп кирлĕ.**

Пăтратса кăпăклантарнă çăмартана шĕвĕ хăймапа хутăштармалла, тăвар, пăрăç сапмалла. Пĕчĕк çатмара 4 хăпарту пĕçермелле, вĕттĕн туранă петрушка сапмалла. Ăна кетчуппа лартса памалла.

### Чăх пĕверĕпе сысна какайĕ

**700 грамм чăх пĕверĕ, сыснан кăкăр тĕлĕнчи пайĕ, пуçлă 1 сухан, пăрăç, тăвар кирлĕ.**

**Соус валли 1 стакан шĕвĕ хăйма, 1/2 стакан томат соусĕ, 1 шăл ыхра, 1 апат кашăкĕ сарпăрăç хатĕрлемелле.**

Тăваткалласа туранă сысна какайне вĕтетнĕ суханпа ăшаламалла. Çак хутăша турилккене хумалла. Пĕвере çатмари çупа пăшăхламалла.

Сысна какайĕпе сухана вĕтетнĕ ыхрапа, шĕвĕ хăймапа, томат соусĕпе, сарпăрăçпа пăтратмалла. Чăх пĕверĕ соуспа тутлă.

## ЫЙТУ-ХУРАВ

# Чей кăмпи – çут çанталăк тухтăрĕ

**Эпир «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата кашни эрнерех чăтăмсăррăн кĕтетпĕр. Эсир яланах ырă сĕнӳ-канашпа пулăшатăр.**

**Эпĕ кӳршĕ кĕленчере ӳсекен кăмпа шывне ĕçнине куртăм. Вăл мĕнрен усăллă-ши? Тархасшăн, çырса пĕлтерсемĕр.**

**Ятне палăртман.**
Елчĕк районĕ,
Шăмалак ялĕ.

Кăмпа чейĕ усăллă та, тутлă та. Ăна апат çинĕ хыççăн 2 е 3 сехетрен ĕçмелле, унсăрăн хырăм хăвăртах выçать. Чей кăмпи ялан сен ылмашăвне лайăхлатать, çавăнпах ытлашши килограмсенчен хăтăлма тĕллев тытнисем унпа усă курма пултараççĕ. Ахальтен мар çутçанталăк тухтăрĕпе танлаштараççĕ ăна. Хырăмлăх, пыршăлăх, пĕвер, пӳре чирĕсемпе нушаланакансене кăмпа чейне ĕçме сĕнеççĕ. Вăл холестерин шайне чакарать, шăнса чирлесен вăй илме пулăшать, пуç мимин ĕçне йĕркелет, шăмă сыппин чирĕсенчен сыхлать.

Каçхине çур стакан кăмпа чейĕ ĕçни лăпкă çывăрма пулăшать. Юн пусăмĕ пĕчĕк тĕк – çак шĕвеке асăрханса ĕçмелле. Апат хуранĕнче юхан суран пулсан тухтăрпа канашламалла.

Чей кăмпине пăхма пĕлмелле. Чĕрĕ организма, чи малтанах, паха шыв, сывлăш, çутă кирлĕ. Виçĕ литр банкинче вăл хăйне хăтлă туйĕ. Паллах, савăта лайăх çуса тасатмалла. Чей хатĕрлемелле, анчах пакетрипе усă курмалла мар. Хăшĕ-пĕри кофе те, симĕс чей те хушать. Ăшă чейе вĕтĕ ала витĕр сăрăхтарса банкăна ямалла. Кăмпана ишме вырăн кирлĕ, çавăнпах савăта тулли тултарма юрамасть. 1 литр чей пуçне 2-3 апат кашăкĕ сахăр хушмалла. Ăна пăтратса ирĕлтермелле, унсăрăн сахăр пĕрчи кăмпана сиенлеме пултарать. Тинех чей кăмпи яма вăхăт çитет. Унтан банкăна темиçе хутлă таса марлăпа хупламалла. Килте 18 градусран сивĕрех пулмалла мар, унсăрăн вăл шăнать.

Банкăна çурма тĕттĕм ăшă вырăна лартмалла. Эрнерен кваса аса интерекен чей йӳçсе çитет.



Чей кăмпине хĕлле уйăхне – 1 хут, çулла кашни эрнере таса шывпа çумалла. Хатĕр напитока урăх савăта куçармалла. Кăмпа çитĕнтернĕ банкăна 1 литр шĕвек хăварса çĕнĕ чей хушмалла.

Чей кăмпине ĕрчетме ансат. Унăн çиелти сийне илсе ăшă шыва ямалла. Савăта пĕр талăклăха тĕттĕм ăшă вырăна лартмалла. Вăй илнĕ кăмпана пылак чейе куçармалла. Вăл хăвăртах çитĕнĕ.

Хырăмлăх ĕçĕ ан пăсăлтăр тесен пĕр уйăх кăмпа чейĕ ĕçсен виçĕ эрнелĕх тăхтав тумалла.

## ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Хĕллехи ĕçсем



Уявсем хыççăн пахча ĕçĕсĕр тунсăхланине те туйма тытăнтăр пулĕ-ха? Сад-пахча халĕ юр айĕнче. Мĕн тумалла пултăр-ха унта? Кăрлач – хĕл варри-çке. Апла пулин те ĕç тупăнатех. Авалтанах ку уйăха чи сивви пек кăна мар, кĕтменлĕхсемпе пуянни тесе те палăртаççĕ.

Çавăнпах йывăç-курăк та хăйне май йывăр тапхăра тӳссе иртерет: çанталăк пĕрре ăшăтать, тепре сивĕтет. Кун пек тапхăрта ăста пахчаçăн садра ĕç тупăнатех. Чи малтанах çырла лаптăкне тата йывăç вулли çумне юр купалас ĕçе малалла тăсмалла. Ку çимĕçсене шартламара та сыхланма пулăшать.

Йывăç тураттисене хуçăласран та сыхламалла. Уйрăмах йĕпе юр çума тытăнсан туратсем унăн йывăрăшне чăтаймасăр часчасах хуçăлаççĕ. Уйрăмах ку ватă йывăçсене тата çапçамрăк хунавсене пырса тивет. Çамрăк хунавсене хӳсе лартнă кĕрт çанталăк ăшăтнă май пусăрăнни те амантма пултарать. Кун пек ан пултăр тесен хунав тĕлне кĕл сапмалла – юр часрах ирĕлĕ те сиен кӳреймĕ.

Шăши таврашĕпе кĕрешес ĕçе те пăрахмалла мар. Йывăç таврашĕнчи, çырла лаптăкĕнчи юра пусарсах тăмалла. Кун пек тусан шăшисен юр айĕне хывнă çулĕ çухалĕ.



Нумай çул ӳсекен чечексене сăнамалла: юрпа лайăх витĕннĕ-и? Ăшă çанталăкра çырла тĕмĕсене те тишкерме юрать. Типнĕ туратсене иртмелле. Çуркунне вăйсăр хунавсене çеç касмалла пулĕ. Тухăç савăнтартăр тесен темиçе вăйлă турата çеç хăвармалла.

Чечек суханĕтымарĕ упранакан вырăна уйăхра пĕрре те пулин пăхма ан манăр. Çĕрме тытăнниме тӳрех ывăтăр.

## ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Утă та кирлĕ, сенаж та



Хĕлле выльăха çитерме чылайăшĕ утăпа пĕрлех улăм та хатĕрлет. Анчах унăн уссине курманнисем те пур. Вăл хăй кăна ĕне-вăкăр хырăмлăхĕнче йывăррăн шăранать. Çапах та мăйракаллă шултăра выльăха мĕн çитермелле-ха?

Чи усăлли: утă, силос, сенаж. Çу кунĕсенче апат çителĕклех хатĕрлесе хăварнă тăк ыйту сиксе тухмалла мар. Апат пĕр тикĕс çиекен выльăх сĕт те лайăх антарать. Чылай хуçалăхра хĕлле ĕне-вăкăра силоспа концентрат çитереççĕ. Çакă хăйне май сиенлĕ те – выльăхăн япаласен ылмашăвĕ пăсăлать. Калăпăр, куккурус силосĕпе икĕ уйăх пĕр чарăнми апатлантарсен ĕнен вар-хырăмĕн ĕçĕ пăсăлать – сĕт йӳçекĕ пысăкланать. Кунашкал пăтăрмахран сыхланса куккурус силосне улăмпа, утăпа, кăшманпа е концентратсемпе хутăш çитермелле.

Сăвакан ĕнене люцерна сенажĕ çитерни вырăнлă. Ăна силоспа утă хушшинче парсан аван. Сенаж çиекен ĕне силос чăмлаканнинчен ытларах сĕт антарать. Выльăха çĕрпеле тăвар кирлине те асра тытмалла.

Ĕнене апат йĕркеллĕ çитерсен пăрулана хыççăн сăвăм пĕр-икĕ уйăх ӳсет, кайран пĕр виçере тытăнса тăрать. Пилĕк уйăхран вăл каялла чакма тытăнать.



КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Ывăлĕ кама пăхнă-ши?

Хулара пурăнакан Верук амăшĕн хӳттисĕр, ăшшисĕр çитĕнчĕ. Чи çывăх çыннăн сăнне те ас тумасть вăл. Хĕрарăм çамрăклах сарăмсăр вилнине кăна пĕлет. Ашшĕ пĕчĕккĕлех апат хатĕрлеме, килте тирпейлеме, япала çума хăнăхтарнă ăна. Тăванĕсем арçынна авлантарма хăтланчĕç, анчах урăххипе çемье çавăрмарĕ кил хуçи. Пушă вăхăта хĕрĕпе ирттерчĕ.

Пĕрре уяв тĕлне Верука амăшĕ çинчен сăвă вĕренме хушрĕç. Кашни сăмаха асра тытма тăрăшрĕ хĕрача. Анчах сцена çине тухсан тем пулчĕ ăна. Те амăшĕ çуккине аса илнипе, те хытă пăлханнипе сасси чĕтрерĕ, куççуль тухрĕ. Тепри пулсан чаршав хыçне кĕрсе тарĕччĕ. Верук чунне хытарса сăвва вĕçне çитиччченех калама хал çитерчĕ. Ачасенчен ытла вĕрентекенсем алă çупса хавхалантарчĕç ăна.

Мăнаккăшĕ патĕнче хăналанма юрататъ Верук. Каççерен çамрăксемпе пĕрле клуба каять. Ваçукпа иккĕшĕ пĕр-пĕрне килĕштернине ялта пурте пĕлеççĕ. Ял варринче чуп тунине те, ыталашса утнине те çынсем курнă. Вăтанма пĕлмест çамрăк ăру: йăлт – куç умĕнче.

Малашлăх пирки нумай хут калаçнă вĕсем. Кĕçĕн ывăл Ваçук тăван килтех тĕпленесшĕн, Верук хуларан яла куçма килĕшмест. Çав вăхăтрах пĕр-пĕрин патне туртать çамрăксене – çак туйăма ниепле те пусараймăн.

Шкул хыççăн Верук мăнаккăшĕ патĕнче уйăха яхăн пурăнчĕ. Ваçукпа уйрăлми çӳрекенскерсем юнашарах выртса çывăрчĕç. Темле ӳкĕтлесен те каччă хăйĕн шухăшне улăштармарĕ, хĕрпе пĕрле хулана каймарĕ.

Вăхăт нумаях та иртмерĕ, Верук каччă тухма хатĕрленни пирки калаçма пуçларĕç ялта. Çапах Ваçук хытă куляннине кăтартмарĕ, хĕрĕпе тĕлпулу шырамарĕ.

Кĕçех çĕнĕ çемьере йыш хушăнчĕ. Вăхăт çитменнипе сăлтавласа Верук яла кайма пăрахрĕ. Халĕ мăнаккăшĕ хăй çула тухать, ялтан сумки-сумкипе кучченеç йăтать, çĕнĕ хыпарсемпе паллаштарать. Ваçук та çемье çавăрнă. Мăшăрĕпе пĕрле виçĕ ача çитĕнтереççĕ.

Верукăн ачи шкула кайма пуçларĕ. Сăнĕпе – каснă-лартнă амăшĕ. Класра чи вăрăмми вăл. «Мĕнле-ха апла? Эпир иксĕмĕр те пĕчĕк. Ывăлăм кама хывнă-ши?» – пĕлесшĕн упăшки. Ваçук шалча пекех вăрăм. Анчах тĕрĕссине каламасть хĕрарăм. «Манăн мăн асаттене пăхнă вăл», – тӳрре тухма хăтланать хайхискер. Арçын, паллах, ĕненеnçи тăвать. Ваçук пирки илтнĕ-ха вăл. Килте вăрçă пуçласа çемьене аркатмалла-и? Упăшки арăмне те, ывăлне те юрататъ.

**ЕКАТЕРИНА.**

ТУЙĂМСЕН ХĔЛХЕМĔ

# Юрату çути

* * *

Пĕр-пĕринчен çĕр-çĕр, пин-пин çухрăмра эпир. Курмастпăр та, илтместпĕр те пĕрпĕрне, çыру та çӳретместпĕр. Пĕррехинче ăнсăртран... чĕнни илтĕнет. Тĕлĕнтермĕш! Пулăшу ыйтнине чухлани – хуравлама хистет. Ачашланма... Çук, кĕлеткене мар, чуна пырса тивет...

Çак самантра малтан çав тери канăççăрлантарни тӳрех епле айваннăн туйăнать. Кулăшла та. Анчах çакă тĕлĕнтермĕш мар, чуншăн çав тери хаклă. Ыттисене каласа кăтартаймăн та, ăнлантараймăн та. Кирлех-ши тата? Кунашкаллине туйман этем тепĕр чун аякран чĕннине илтме, инçетрен те пĕр-пĕринпе киленме май пуррине пĕлмест. Тепри ав çилпе вĕçсе килекен ачашлăхпа çепĕçлĕхе темрен ытла хаклать. Никам та ĕненмĕ-и? Тепĕр тесен, ăмсанччăрах, кĕвĕçчĕрех...

Чи кирли – çак самантра эсĕ ăна кирлине туйса чĕннине илтме пултарни. Çын куçне курăнман çирĕп те шанчăклă çыхăну йĕркеленетех. Ачашлассишĕн, инçĕшне парăнтарса чуна кĕрессишĕн, чĕрене перĕнсе унăн ăшшине туяссишĕн, сана ăшăтассишĕн...

* * *

Мĕн тери ташлас килетчĕ! Хал пĕтсен те, вăйран кайсан та... Илемлĕ те лăпкă кĕвĕпе санпа мăшăррăн çаврăнас кăмăл пурччĕ, анчах çумра пулмарăн...

Юнашар пулмарăн, мĕншĕн тесен эсĕ ташлама юратмастăн. Уçăлса çӳреме те, курăк çинче йăваланма та, ахăлтатма та, пурнăçпа киленсе илемлĕн йăл кулма та кăмăлламастăн. Ташлама та... Эпĕ вара чун-чĕререн авкаланма юрататăп. Юрă сăмахĕсене мар, кĕввине илтетĕп. Ташă мана çăмăллăх кӳрет. Эсĕ паман ирĕклĕхе парнелет.

Эсĕ мана асап çеç кӳреттĕн. Хăв палăртнă пек çеç пурăнтараттăн. Кашни кун санăн кăмăлупа шухăш-ĕмĕтне тивĕçтермелле иртетчĕ. Çавăнпах ĕмĕтленме те пăрахрăм. Пурăнма та мантăм тейĕн. Пурнăçпа туллин киленме те.

Эсĕ вара мĕн тери телейлĕччĕ – мана парăнтарнă-çке. Эпĕ те малтанах тем тума та хатĕрччĕ – эсĕ çеç мана юрат. Куçунта пачах урăх хĕлхемччĕ. Мана вара расна çутă кирлĕ – Юрату çути. Пĕтĕмпех йĕркеллех пулатчĕ-ха, санран чăн-чăн юрату ыйтман тăк.

Эпĕ таса туйăм кирлине систертĕм те – çухалтăн... Манăн вара санпа çав тери ачашшăн ташлассăм килчĕ, анчах та эсĕ текех çумра çукчĕ ĕнтĕ...

* * *

Шухăшласа çеç пăх: вăл текех санăн мар. Ирхине те унпа юнашар эсĕ вăранмастăн. Урăххине чуп тăвать... Ирсерен еплерех чипер тата вăл!

Вăл хатĕрленĕ апат та санăн сĕтеллӳ çинче мар текех. Тĕлпулăваваскать, каллех сан патна мар. Кун епле иртнине итлекенĕ те – урăххи. Çепĕç çырусене те халĕ урăххи патне вĕçтерет. Каççерен киленĕве те сана мар парнелет. Каççерен çеç те мар, ирхине те теприне чуп тăвать. Вăл çеç пултарнă пек ачашшăн, çепĕççĕн – эсĕ кăмăлланă пек...

Ĕмĕчĕсем те санпа çыхăнман текех. Каçхи апат, ăшă йăл кулă... Çупкă та сана лекмест халĕ. Çепĕç сăмахсене те пачах урăх çын хăлхинчен пăшăлтататъ. Вăл халĕ пачах та санăн мар...

Килĕшмест-и? Эппин – упра!

**Ч.С.**

ЭХ, ÇАМРĂКЛĂХ!

# Лăпкă кĕвĕ çеç...

Упăшка вăтăр тултарнине тăвансемпе, туссемпе пухăнса уявларăмăр. Яшлахĕрле çӳренĕ вăхăтсене аса илсе юлташсемпе каçхи клуба çитме тĕв турăмăр.

Канмалли кун дискотекăра халăх чылай иккен. Çамрăксем те, аслăраххисем те пур. Кам мĕнле пĕлет – çапла хиркеленет. Пирĕн пысăк ушкăн та часах юрă-кĕвĕ çеммипе килĕшӳллĕн авкаланма тытăнчĕ. Ди-джей паян тĕнче кĕрлеттерекен юрăсене те, темиçе çул каяллахисене те черетлерĕ. Ташла-ташла тарласан лăпкă кĕвĕ кайрĕ. Мăшăрпа ыталанса вунă çул каялла таврăнма ыйтакан палланă юрăпа урай варринче çаврăнтăмăр.

...Вунпиллĕкри хĕрачаччĕ эпĕ ун чухне. Хулара вĕренекен кӳршĕ хĕрĕ канмалли кунсенче яла килсен клуба тухнă чухне мана та пĕрле чĕнетчĕ. Кĕтерук питех ыйтнипе анне те пĕр-икĕ сехетлĕхе кăларатчĕ. Чăн та, каланине итленĕ. Аслă тусăмпа ташлаттăмăр та киле таврăнаттăмăр.

Хĕрсем йышлăччĕ пирĕн ялта, каччисем сахалрахчĕ. Çакна пĕлсе савни шырама кӳршĕ ял йĕкĕчĕсем час-часах пухăнатчĕç. Пĕррехинче Кĕтерука куç хывакан та тупăнчĕ. Çакăн хыççăн Петĕр пирĕн ялта тăтăшах курăнма пуçларĕ. Килĕшекен хĕре килне ăсатрĕ. Мана кичем пуласран тусне Кĕçтука илсе килетчĕ. Çапла тăваттăн уçăлса çӳресех хĕл каçрăмăр темелле.

Тĕрĕссипе, канмалли кунсене хам та чăтăмсăррăн кĕтекен пултăм. Кĕçтука курас килетчĕ. Илемлĕччĕ вăл, çӳллĕччĕ, яштакаччĕ. Кӳршĕ хĕрĕ хуларан килнĕкилменех ун патне чупса каçаттăм, клуба миçере тухасса калаçса татăлаттăмăр. Савниçĕм тепĕр чухне килместчĕ. Кун пек чухне Петĕртен çыру тыттарса яратчĕ, тунсăхланине пĕлтеретчĕ. Вĕренӳ эрни вăрăма тăсăлатчĕ. Çавăнпах каярах çырусене почта урлă яма та хăнăхрăмăр. Темех те çырмастăмăр хут çине. Ытларах шкулти, килти ĕç-пуç пирки пĕлтереттĕмĕр. Çавах чун хăпартланатчĕ. Çырусем аттепе анне аллине ан лекчĕр тесех почтăна пысăк тăхтавра хам чупаттăм. «Паян çыру çук», – йăл кулатчĕ Марье аппа. Савăнмалли сăлтав пур чухне: «Шел, ман пата çыракан çук. Эпĕ те хĕпĕртĕттĕм», – тетчĕ шăл йĕрсе.

Çапла çуркунне те çитрĕ. Экзамен çывхарнăран анне урама тухма текех ирĕк памарĕ. Ара, тăххăрмĕш класра вĕренеттĕм ун чухне. Кĕçтук та, шкултан вĕренсе тухма хатĕрленекенскер, вăхăтне кӳршĕ яла утса ирттермерĕ. Апла пулин те çыру вĕçме пăрахмарĕ. Вĕсене кĕнеке айне хурса вăрттăн вулаттăм. Чипер каччă урокра та асран каймa пĕлместчĕ. Хĕр тусăмсем çакна куратчĕç паллах. Ăмсанатчĕç. Вĕсен урама тухма та ирĕк çук-çке. Эпĕ вара



клуба çӳретĕп çеç мар, савни те тупнă. Çырусене вулассишĕн антăхатчĕç – памастăм. Çывăх тантăшăма çеç кăтартаттăм вĕсене.

Часах çу кунĕсем çитрĕç, экзаменсем те хыçа юлчĕç. Кĕçтук университета вĕренме кĕчĕ. Кĕтерукпа Петĕр çаплах пĕрлех çӳрерĕç. Верук аппа та хĕрĕ кам патне тухнине пĕлсе çитрĕ, ăна урама пĕччен кăларма текех хăрамарĕ. Çавăнпах пулас кĕрӳ текех Кĕçтука пĕрле илсе çӳремерĕ. Сайра-хутра çеç килчĕ савниçĕм тĕлпулăва.

Манăн вара ăна яланах курас килетчĕ. Унсăр тунсăхлаттăм. Çавăнпах хушăран кӳршĕ яла хам çӳреттĕм. Май пулсан паллах. Е тимĕр урхамахĕпе леçме Петĕре ыйтаттăм, е клубри çамрăксем пуçтарăнса катаччи чупма каятчĕç – вĕсемпе явăçаттăм. Кирлĕ çынна кураттăм тепĕр чухне, хушăран савнипе тĕл пулмасăрах таврăнаттăм. Эпĕ каччă хыççăн чупнине Кĕтерук сивлетчĕ. Куншăн кӳршĕ хĕрĕ миçе хутчен ятлаçман пуль? Итлеместĕм ăна.

Пĕррехинче хамăр урамрах пурăнакан Танюш клубран чĕнсе кăларчĕ те калаçмалли пур сăлтавпа айккине пăрчĕ. Эпĕ савнипе тĕл пулма ăнтăлнине вăл та асăрханă ахăр.

– Анюк, лайăх хĕрача-çке эсĕ. Кĕçтук хыççăн мĕншĕн хăв чупатăн? Юратать пулсан хăех килет. Çамрăк-ха эсĕ, ача çеç, çавăнпах ăнланмастăн та. Кӳршĕ яла хăв çӳресе ятна çеç варалăн, ĕненсем. Эпĕ те сан пекех пулнă. Кăштах ӳсрĕм те кăмăл-туйăма чарма, пулăмсене урăхларах хаклама вĕрентĕм. Эсĕ те хăвна ална ил, – ырă сунчĕ хайхи.

– Манăн ăна курас килет. Унăн вара килме майĕ çук, – Кĕçтука тӳрре кăларма хăтлантăм эпĕ.

– Каларăм-çке, килĕштерсен – хăех килĕччĕ. Манăн сĕнĕве шута ил. Чавса çывăх та – кайран çыртаймăн. Эпĕ каланине пĕрре мар аса илĕн. Пурнăçра каччăсем нумай тĕл пулĕç. Сăпайлă-çке эсĕ, çак пахалăхна ан çухат, – терĕ Танюш.

«Эсĕ юратман йĕкĕт хыççăн чупнăшăн кам айăплă? Манăн пачах урăхла пулĕ», – шухăшларăм унăн çурăмĕнчен тинкерсе. Çав каçах Кĕçтука курассишĕн пĕлĕшĕмпе икĕ ял хушшинчи кĕпер патне уттартăмăр. Валя та кӳршĕ ял каччипе тĕл пулатчĕ. Телефонсем пурччĕ вĕсен. Хайхисем кĕпер айĕнче курнăçма калаçса татăлнă. Пĕччен утас килменрен Вова Кĕçтука чĕнме шантарнă. Ара, туссем вĕсем. Вальăна вара мана ертсе пыма хушнă. Тĕттĕммине пăхмасăр утрăмăр çапла. Машина çути курăнмассерен çул айккинче пытантăмăр хамăр. Паллакансем курасран намăслантăмăр-ши? Е палламаннисем чарăнасран шиклентĕмĕр-ши? Палăртнă вырăна çитрĕмĕр хайхи. Каччăсем килессе кĕпер айĕнче çур сехет кĕтрĕмĕр...

Кĕркунне хулана кайрĕ вăл. Пушшех сайра курнăçрăмăр. Хĕл каçипе те темиçе хутчен çеç тĕл пултăмăр. Вунулттă тултарнă ятпа аттепе анне телефон парнелерĕç те хушăран шăнкăравлаттăм. Анчах Кĕçтук тытмастчĕ. Тунсăх та пĕчĕккĕнех сĕвĕрĕлчĕ. Çулталăк иртсен Танюшăн ырă сăмахĕ тĕрĕссине ăнлантăм. Аслисен канашне шута илмеллине ăша хыврăм.

Тепĕр çăва тухсан Алюшпа паллашрăмăр. Кĕçтук пекехчĕ вăл: çӳллĕ, хура çӳçлĕ, хăмăр куçлă, анчах кăмăлĕпе пачах урăхчĕ. Тăтăшах шăнкăравлатчĕ, пĕрмай килетчĕ. Кăмăлăм та часах тепĕр кӳршĕ ял каччи енне çаврăнчĕ. Эпĕ Алюшпа хутшăннине курсан Кĕçтукăн юрату хĕлхемĕ вăйланчĕ-ши, кĕвĕçӳ çуралчĕ-ши – улшăнчĕ вăл, хыçран чупма пуçларĕ. Анчах эпĕ ун енне текех çавăрăнса та пăхмарăм...

Мăшăрăмпа дискотекăра çаврăннă лăпкă кĕвĕпе шăпах Кĕçтукпа ташлаттăмăр та. Каччăпа ыталанса пĕрремĕш хутчен вунă çул каялла çаврăннă эпĕ. Ун чухне Кĕçтуксăр пуçне урăх никама та юратмассăн, вунă çул нихăçан иртмессĕн туйăнатчĕ. Çирĕм пиллĕке çитнине сисмерĕм те. Теçетке çул ним мар хыçа юлчĕ. Пĕрремĕш юратуран та нимĕн те тăрса юлмарĕ. Çак лăпкă кĕвĕ çеç аса илтерет Кĕçтука.

**АНЮК.**

Шупашкар хули.

ЮМАХСЕМ

Галина ЗОТОВА

# Çынран ан кул

Пĕр карчăкпа старик пурăннă тет. Вĕсен Мĕтри ятлă пĕртен-пĕр ывăл пулнă тет. Çак Мĕтри питĕ ачашланма юратнă тет. Вăл ÿссе пынăçемĕн тата усалланса, кушталанса пырать тет. Хăйне пысăка хурать, çынран кулма та именмест тет.

Пĕррехинче Мĕтри урама тухать те çывăхри кÿлĕре илемлĕ акăша курать. Лешĕ аманнă-мĕн. Çавăнпах инçе каяйман.

Акăша курсан Мĕтри унта чупса пынă, кайăка шуйхантарма, чулпа пеме, кăшкăрашма тытăннă. Хăранă, сехерленсе ÿкнĕ акăш пур вăйне пухса кÿлĕ варринелле ишсе кайнă. Вăл унта та лăпкă ларайман, хăрушлăх каллех килесрен пуçне ун-кун пăркаласа тавраналла тинкернĕ.

Çакăн хыççăн темиçе кун иртсен Мĕтри чирлесе ÿкнĕ. Унăн шăмшакĕ вĕриленнĕ, пуçĕ ыратнă. Урисем те темшĕн чăтма çук сурнă, хăрахху çине çеç пусма май килнĕ. Çапла Мĕтри темиçе кун нушаланса выртнă, чирĕ ниепле те иртсе кайман. Ашшĕпе амăшĕ хăраса ÿкнĕ, вĕсем ачана сиплевçĕ карчăк патне илсе каяс тенĕ. Сиплевçĕ вĕсен хуйхине тÿрех ăнланнă, часах чирĕн сăлтавне те пĕлтернĕ:

– Сирĕн ывăлăр, – тенĕ вăл, – кÿлĕри акăша кÿрентернĕ, ăна питĕ хытă хăратнă. Мĕтрин çав акăша шыраса тупса каçару ыйтмалла. Акăш пурăнакан кÿлĕри шывпа пĕрĕхсен ачан ури те тÿрленĕ.

Ватăсем урхамах кÿлнĕ те ывăлне лартса акăша шырама тухса кайнă. Акăшĕ кунти кÿлле пăрахса кайнă иккен, Мĕтри хытах хăратнă-тăр ăна.

Пыраççĕ вĕсем çулпа. Хирĕç пĕр пĕчĕк кайăк вĕçсе килет, хăй чĕлхипе чивлетсе:

– Мĕтри мана хĕлле пĕрчĕ сапса парсан эпĕ акăш ăçтине калатăп сире, – тет.

– Сапса парăп, яланах пулăшăп, – сăмах парать ача.

Кайăк кăтартнă çулпа кайса акăша шыраса тупаççĕ хайхисем, унран каçару ыйтаççĕ те Мĕтрие чиртен сыватма тархаслаççĕ.

Акăшĕ вĕсене:

– Сирĕн пахчара хитре кĕлчечек тĕмми пур. Чи пысăк чечекĕн йĕппине илсе килсе ман урари хуртса туртса кăлармалла. Вара эпĕ сывалатăп, Мĕтрие те пулăшма шантаратăп, – тет.

Çапла калать те акăш шывпа ачан урине пĕрĕхет. Мĕтри ури çав самантрах тÿрленет, ача чипер утакан пулать. Вара вăл часрах киле вĕçтерсе кайса кĕлчечекĕн пысăк йĕппине тупса килет, акăш урине тÿрлетет.

Çавăнтанпа акăш карчăкпа старикĕн кÿллинче пурăнма тытăнать, нимĕнрен те хăрамасть. Унтах вăл мăшăр та тупать тет.

Мĕтри те ĕнтĕ хăйне йĕркеллĕ тытать тет, ыттисенчен кулма пăрахать, сăпайлă калаçать. Хăйне акăша тупма пулăшнă пĕчĕк кайăка та манмасть, хĕлле яланах пĕрчĕ сапса парать тет.

# Асамлă мечĕк

Таньăна çуралнă кун ячĕпе асамлă мечĕк парнеленĕ. Мечĕк пулăшнипе хĕрача таврари чи паллă сиплевçĕ пулса тăнă. Кам та пулин чирлесен тÿрех ун патне çул тытнă. Таня чирлĕ çынна мечĕкпе выляма ирĕк панă, лешĕ ăна тытсанах вăй кĕнине туйнă. Асамлă вăй пуçа лăплантарнă, чĕрене йĕркеллĕ таптарнă, кĕçех куç та савăнăçлăн çуталма пуçланă, кăмăл та çĕкленнĕ. Çын куç умĕнчех сывалнă.

Сиплевçĕ пирки ырă ят сарăлнă. Хĕрача нихăçан та укçа илмен, килекенсем ăна парнесемпе тав тунă. Пĕри пылпа хăналанă, тепри – сиплĕ варенипе, виççĕмĕшĕ – кукăль-икерчĕпе, тумтир тавраш̆е парнелекен те тупăннă. Çитĕннĕçемĕн хĕр чиперленсех пынă. Ăна качча илес текенсем кашни каç урхамахпа килнĕ. Пĕри тепринчен маттуртарах, пуянрах пулнă. Кашниех Таньăна качча илес шутпа мухтаннă, маттур хĕре хăй енне çавăрма тăрăшнă.

Кÿршĕри Унтри те хĕре килĕштернĕ, анчах кун пирки калама хăяйман, питĕ вăтаннă. Сăн-питрен тиркемелли каччă пулман-ха вăл. Урхамахĕ те пулнă, амăшĕпе тата йăмăкĕпе ĕне те усранă, кил-çурта хуçалантарман. Улăхра утă çулнă чухне Унтри Таньăна пулăшнă. Уттине те пĕрлех тиесе килнĕ, лав хыççăн иккĕшĕ юнашарах утнă. Анчах каччă чунне уçма хăяйман.

Хĕрĕн качча каймалли вăхăчĕ çывхарнă. «Хăшне суйласа илмелле-ши? Ăçта-ши чăн-чăн юрату?» – чылай пуç ватнă вăл.

Пĕррехинче Таня хĕрсемпе пĕрле шыва кĕме кайнă чухне хăйĕн асамлă мечĕкне те илнĕ. Шыв хĕрринче вылянă чухне мечĕк шыва кĕрсе ÿкнĕ. Çакна курсан Таня йĕме пуçланă.

– Мечĕк шывра путмасть-çке, авă вăл шыв çинчех ярăнса çÿрет, – тĕлĕннĕ тантăшĕсем.

– Мĕншĕн йĕрес мар-ха манăн?! Ку мечĕк ахальскер мар, асамлăскерччĕ. Мана ăна çуралнă кун ячĕпе парнеленĕччĕ. Асамлă мечĕк пулăшнипе эпĕ таврари паллă сиплевçĕ пулса тăтăм. Анчах мечĕк шывпа йĕпенсен унăн асамлăхĕ çухалать. Эпĕ паянтан текех асамçă пулаймастăп, – макăрнă Таня. Вăл пĕр чарăнми ÿхлесе мечĕке шывран кăларнă та килнелле утнă.

Çав каçхине те хĕре çураçма килекенсем пулнă. Анчах Таня асамлă мечĕке шыва ÿкернине илтсен вĕсем урхамахĕсене каялла çавăрнă. Мечĕк хăйĕн асамлăхне çухатни çинчен кĕçех пурте илтнĕ. Тинех хĕре евчĕсем аптратма пăрахнă.

Пĕр каçхине салху хĕре Унтри асăрханă, сывлăх сунса унпа сăмах ваклама пуçланă:

– Мĕншĕн салху эсĕ, кÿршĕ хĕрĕ?

– Мĕншĕн салху пулас мар-ха манăн? Эпĕ текех сиплевçĕ пулаймастăп, каччăсем те хăтана килме пăрахрĕç.

– Эсĕ маншăн яланах асамçă, – хăй хĕре юратнине тинех пĕлтернĕ каччă.

Çакăн хыççăн хĕрпе каччă пĕрлешнĕ, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнма пуçланă. Мечĕк хăйĕн асамлăхне çухатман-мĕн. Ăна хĕр хăйне чăннипех юратакан çынна тĕрĕслес шухăшпа çеç шывалла кăларнă иккен. Таня халĕ те таврари чи паллă сиплевçĕ, ырă асамçă.

ПЕТĔР ХУСАНКАЙ – 110 ÇУЛ

# «Эх, мăнтарăн сарă хĕрĕ...»

Юрату çинчен сăвă çырса курман çын та çук тесе ĕнентересшĕн хăш-пĕри. Çакăнпа йăлтах килĕшместĕп-ха, анчах унашкал поэта тупаймастăнах.

Петĕр Хусанкай çинчен те çакнах калама тивет. 1963 çулта вăл «Савни» ятлă кĕнеке те кăларнă. Юрату сăввисене «Суйласа илнисем» кĕнекин пĕрремĕш томне 1968 çулта çав ятпах кĕртнĕ.

Вулатăн та – «юрататăп», «чуп тăватăп», «ыталатăп» сăмахсем тĕл пулмаççĕпе пĕрех. Вĕсенче поэтăн кун-çулне те куратăн, пурнăç çинчен шухăша кайни те сисĕнет. «Хура пĕркенчĕк» ярăмĕ те чи ăшă, çепĕç туйăмпа çыхăннă. Сергей Есенинăн сăввисене кăштах аса илтерет вăл. Хăй вăхăтĕнче çавăншăн поэта тиркешсе калаçакансем те тупăннă. Пирĕн шутпа, ăна çав ярăмшăн тав тумалла çеç: чăвашла та вырăсларан кая мар хăватлă çырма май пуррине кăтартса панă вăл хăй вăхăтĕнче.

Шел пулин те, халĕ юрату çинчен пĕрмай çыраккансем /çăракансем/ ĕрчесе кайрĕç. Итлесе пăхар-ха «Кайри – мала» хит-парада: пĕр юрă та «юрату», «чуп тăватăп», «ыталатăп», «куçусем» сăмахсемсĕр çукпа пĕрех. Ахальтен каламаççĕ ĕнтĕ «ним çырма пĕлмесен юрату пирки çыр» тесе. Тĕрĕссипе, ăна сăвă халалласси çав тери йывăр пулмалла, мĕншĕн тесен ун çинчен мĕн чухлĕ çырнă! Çавăнпа çĕнĕ сăнарлăх тупма питĕ кансĕр.

Петĕр Хусанкайăн сăввисем вара кашни хăйне евĕрлĕ, ыттисенничен пурте пач уйрăлса тăраççĕ.

**Василий КЕРВЕН.**

* * *

Мерчен куçлă кĕмĕл çĕрĕ
Пĕр ята асăнтарать.
Эх, мăнтарăн сарă хĕрĕ,
Хыптарать те çунтарать!

Çеçкеленнĕ улма сачĕ
Тĕлĕрет-ха шăп-шăпах.
Алтăр çăлтăр, каласамччĕ:
Мĕнле пулĕ ман шăпа?
1923.

* * *

Ĕнер кăна тĕнче чăпарччĕ,
Паян вăл акă шап-шурах.
Хĕвел те именсе хăпарчĕ
Çанталăк тасине кура.

Ĕнер кăна тумхах та лакăм
Илетчĕ çул çинче чуна.
Паян ут кÿлтĕм те юрттартăм,
Пĕр сассăр вирхĕнчĕ çуна.

Çемçе те нÿрлĕ шурă юрĕ
Пусăрăнса çул пулнăçем
Ăшра ман çитĕнчĕ пĕр юрă,
Чĕре туптарчĕ сăмахсем.

Инçе-и, çывăх-и – çитетпĕр,
Тухатпăр асăннă çĕре.
Сиксе ларсам манпа, чипер хĕр –
Ман чун хавалĕ, ман чĕре!

Илемлĕ ир, çунаçăм хÿтĕ,
Тип утă унăн ăшĕнче.
Çапах пĕччен шăнса эп кÿтĕп,
Сана та сивĕ-тĕр пĕччен.

Сиксе ларсам манпа эс, тусăм.
Ларсам хăюллăн, тачăрах.
Çурма çула çитет ман утăм,
Иртсе те кайĕ сансăрах.

Иртсе кайсассăн эс кÿренĕн,
Тăванăн курăнĕ çуна...
Пуçне ухса юртан çÿренĕм
«Чипер юл!» тенĕ пек сана.
1925.

* * *

Кĕтрĕм, кĕтрĕм эп сана,
савниçĕм,
Йăмăхтартăм мăшăр куçăма.
Кантăка йăр-яр çуратчĕ çиçĕм,
Халь – хуллен пуçларĕ
лăпланма.

Инçетре вылян шупка шевле те
Сан туту чеченĕн кулнă пек,
Тапхăр-тапхăр вăшăрхан
çиле те
Пурçăн тутăр вĕлкĕшет
пуль теп.

Ыйхăла пуçланă куçăма эс
Халь килсе уçассăн туйăнан.
Тĕлĕрсе ларатăп-çке, айван ăс:
Кĕтĕн... ыталарăн мăйăмран...

Кăкăрта кĕртех турĕ чĕремçĕм,
Сана чăмăртарăм хам çумма.
Çаплипех тÿнсе вара, пикемçĕм,
Тăснă эпĕ тутлă ыйхăма.

Шурăмпуç тула сенкеррĕн
хыпнă,
Эпĕ аташатăп тĕлĕкре.
Вăранайрăм – ыталаса тытнă,
Чăмăртанă мамăк минтере.
1925.

* * *

Вăшăлăх та вăшăл, ай,
сулхăн çил,
Улма çеçкисене татса ан ил.

Ан çаратах ĕшнен илемĕшне,
Ӳпкелĕ-çке сана чечен ĕшне.

Çил мар иккен вăл, тусăмçăм,
çил мар,
Вăл – ман ăшри сиксе çунан
кăвар.

Çеçке вĕçмест иккен, çеçке
ларать:
Вĕçет ман шухă шухăш
пуç тавра...
1926.

* * *

Мĕнле уяр! Ман ыйхăм çук.
Пĕр сан çинче çак каç ман
шухăш.
Юн тунсăхпа вылянă чух
Юмах та, пурăнăç та хутăш.

Эс халь ик-виçĕ хут чипер,
Пăхсан ху пек те, ху пек мар та...
Юрла-ха «Чĕнтĕрлĕ кĕпер» –
Сассу чуна çунатлантартăр.

Юрла-ха. Лăпкă кассăма,
Арман умне аса илем пĕр.
Каç кÿлĕм лĕп тÿлек çырма,
Унта миçе шыва кĕмен-тĕр!

Хăвартăм эп тăван яла,
Хăвартăм, тусăм,
хĕрхенмерĕм...
Хирте ак халь ула-чăла,
Йăрансенче – хуралнă эрĕм.

Çурхи шывсем юхса пĕтсен,
Каллех тапранĕ ешĕл курăк.
Пĕртен-пĕрех кил-йыш пĕччен,
Ăна каллех эп çукшăн хурлăх...

Юн тунсăхпа вылянă чух
Пĕр сан çинченччĕ манăн
шухăш.
Юрăпала çĕкленнĕ чун
Пурне те ăнкарать халь хутăш.
1927.

* * *

Ăçта пулсассăн та эс халĕ,
Кирек ăçта пулсассăн та, –
Санпа пĕрле ман чун хавалĕ,
Ман юррăм санăн асунта.

Пĕрре çеç мар юратăн, савăн,
Пĕрне çеç мар ыталăн эс.
Анчах пĕрехçи пулĕ санăн,
Асран ярайман пĕрне çеç.

Çынсем усламшăн çеç ураççĕ,
Тесе мана эс ан кала.
Ман сан сăнна ялан усрасчĕ,
Илсе каясчĕ хампала.

Çынсем хăйсемшĕн çеç
чĕтреççĕ,
Тесе те эс ан ÿпкеле.
Çут тĕнчере пурнать поэзи,
Çавна парне ман кÿмелле.

Парни вăл – хам та, ман
савни те...
Ăна пĕлместĕн эс иккен.
Мана халь йывăр, йывăр питĕ:
Чĕремçĕм уйрăлчĕ икке!
1928.

* * *

Нумайранпа эп макăрманччĕ,
Паян – вăтанăçăм таçта...
Чĕрем кÿлешÿпе тăртанчĕ,
Улман-улман куççуль çăтап.

Çук, тусăм, çук, Отелло мар эп,
Эс ху та Дездемона мар:
Мĕнле хавас сана эп парăп –
Çаплах асап мана эс пар.

Эс манăн сăнăма пытартăн,
Мĕскер тăватăн эс унпа?
Пĕлетĕп: витĕнĕ сăпатăм
Çурма çултах сивлек хумпа.

Эс ăнланаймăн, ырă тусăм, –
Салхуллă куллăм айĕнчен
Мĕн тилмĕрет ман хурлă куçăм,
Эс ăнланаймăн... нумайччен!

* * *

Ак, тинĕс, эпĕр иккĕнех:
Вăл кайрĕ, тинĕсĕм, вăл кайрĕ...
Тен, манăн хурлăх кĕввине
Эс итлеме хавас та мар-и.

Анчах кама калас-ха ман?
Сан хумусем асамлă симĕс...
Эп ас туман, асăрхаман;
Эс ху ăна вăрларăн, тинĕс!

Çапах та маншăн эсĕ – тус,
Мана витнех кун-çул тăварĕ.
Ман пурнăç – тăтăш ăсату...
Вăл кайрĕ, тинĕсĕм, вăл кайрĕ!
1933.





ПАРĂНМАННИСЕМ

# Алă çинче çӳресех ĕçлет



**Çирĕм пилĕк çул каяллахи хăрушă куна аса илесшĕнех мар Çĕпрел районĕнчи Аслă Аксури Петр Мускатинов. Вуннăра чухне вăл çурăм шăмми суранланнине пула утайми пулнă. Çак инкек унăн пурнăçне икке пайласа тĕппипе улăштарнă. Тантăшĕсемпе выляс вырăнне икĕ çула яхăн вырăн çинчен тăраймасăр выртнă, унтан кӳме çине ларнă арçын ача. Çапах парăнма, хуçăлма, çынна шанса пурăнма шухăшламан та вăл.**

– Ку инкекре эпĕ пĕччен юлмарăм. Ман пата тантăшсемпе юлташсем килсех тăчĕç. Суранланиччен эпĕ футболла, хоккейла выляма, йĕлтĕрпе чупма питĕ юрататтăм. Мана туссем çунапа ярăнтарма пуçларĕç. Кӳмене лартса çыран хĕррине пулă тытма, стадиона футболла вылянине курма илсе каятчĕç, – каласа кăтартать Петр.

Спорта юратаканскер тĕнче ăмăртăвĕсене хутшăнма ĕмĕтленнĕ. Утайми пулсан та шанăçне çухатман. Пĕрре, вунă çул каялла, Туринта иртнĕ Паралимп вăййисенче спортсменсем йĕлтĕрпе чупнине курнă вăл. Çакăн хыççăн старта тухас ĕмĕт çирĕпленнĕ çеç. Вăл çийĕнчех çăмăл машинине ларса Хусана вĕçтернĕ. Унта сусăрсен физкультурăпа спорт обществине çитнĕ. Тренировка валли йĕлтĕрлĕ кӳме панă ăна.

– Икĕ уйăхранах тренер Сыктывкарти Раççей чемпионатне хутшăнма чĕнчĕ. Эпĕ тӳрех килĕшрĕм. Унта финиша 10-мĕш çитрĕм. Çакă мана курăмлăрах çитĕнӳ тума хавхалантарчĕ. Эпĕ çулталăкĕпех ăмăртусене хатĕрлентĕм. Юр çук вăхăтра йĕлтĕр вырăнне роллерсемпе усă куртăм, – тет спортсмен. Кĕçех Раççей чемпионачĕсенче малти вырăнсем йышăнма пуçланă вăл.

Каярах юлташне пăхса армрестлинг енĕпе хатĕрленес, тĕнче чемпионатне хутшăнас кăмăл çуралнă унăн. Пĕлтĕр Польшăра спортăн çак тĕсĕпе иртнĕ ăмăртура иккĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ Петр.

Район Сабантуйĕнче турник çинче туртăнассипе ăна çитекен çук. Спортсмен тăххăрмĕш çул пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Кăçал та çĕнтерес тĕллевлĕ.

Кивĕ Чакăри чăваш хĕрне Анжелăна куç хывнă вăл. Иккĕшĕ тăватă çул туслă çӳренĕ. "Мĕн тума кирлĕ сана çакнашкал çемье? Малашлăху пирки шухăшла", – пикене çакнашкал калакан та тупăннă. Хĕр вĕсен сăмахне хăлхине чикмен. Халĕ Петрпа Анжела Мускатиновсем икĕ ывăл çитĕнтереççĕ.

Тăхăр çул каялла пысăк, хăтлă çурт лартнă вĕсем. Картиш тулли выльăх усраççĕ.

– Картишĕнчи, пахчари, витери ĕçсене алă çинче çӳресех тăватăп. Аслăк çине те хăпарса каятăп. Сваркăпа хамах ĕçлетĕп. Акă кил хапхине тимĕр авса, эрешлесе турăм. Мунча хăпартрăм, кăмакине ăсталарăм. Хуçалăхра ĕçлеме мотоблок туянтăм, косилка та пур. Кил таврашĕнче нумай ĕçлетĕп, çавăнпа алă вăйĕ хушăнсах пырать, – тĕлĕнтерме пăрахмасть Петр.

Темле пулсан та урама тухма, çынсемпе хутшăнма, чуна килĕшекен ĕç тупма сĕнет вăл. Вара пурнăç та йĕркеленĕ.

**Майя ИГНАТЬЕВА.**
Тутарстан.

ЙĂЛА-ЙĔРКЕ

# Кивĕ Çĕнĕ çул кĕреки

**Кăрлач уйăхĕн 14-мĕшĕнче Севастопольти Наципе культура обществисен ассоциацийĕ Крымри халăхсен хĕллехи уявĕсене халалланă каçа пуçтараннă. Вĕсем пĕр-пĕрне хăйсен культурипе, апачĕпе, çи-пуçĕпе, йăли-йĕркипе паллаштарнă. Севастополь Правительстви уявсемпе саламланă май Ассоциаци ĕçне пысăка хурса хакланă. Çак йыш наци халахĕсен культурине упраса хăварнине тата аталантарнине, туслă пурăннине палăртнă.**

Ку организаци йĕркеленнĕренпе 23 çул çитнĕ. Унăн ертӳçи Валерий Милодан общество ĕçĕшĕн вăйне шеллемест, тĕрлĕ уяв, конкурс, курав йĕркелет. Сăмах май, Крым халăхĕсен хушшинче чăваш, мордва, беларуç, эстон, гагауз обществисене чи лайăххисен йышне кĕртнĕ.

Хальхинче кĕрекене пуçтараннисем тĕрлĕ халăх юрри-ташшипе киленнĕ. Унтан вĕсем наци çи-пуçĕн парадне тухнă, юрă картине тăнă. Çав вăхăтрах пурте пĕр-пĕрне наци апачĕпе хăналанă.

"Кивĕ Çĕнĕ çул – Совет Союзĕнче пурăннă халăхсен юратнă уявĕ. Вăл юлташсемпе тĕл пулма, иртнĕ çула пĕтĕмлетме, пĕр-пĕрне ырлăх-сывлăх сунма май парать", – тенĕ ассоциаци ертӳçин çумĕ Ольга Малиновская.

**"INFORMER" хыпарĕсемпе усă курнă.**




ТУПМА ПУЛĂШĂР!

# Василий Павловăн тăванĕсем ăçта-ши?

**Ырă кун, "Чăваш хĕрарăмĕ" хаçатра ĕçлекенсем! Эпĕ сирĕнтен пулăшу ыйтасшăн. Тăван пиччен ашшĕн Василий Павловăн /1919-1925 çулсенче çуралнă/ тăванĕсене тупма пулăшсамăр. Çырăва малтанах хатĕрленĕ. Анчах "Чăваш хĕрарăмĕн" адресне пĕлменрен выртсах кайрĕ вăл. Тинех сирĕн хаçата çырăнса илекен чăвашсене тĕл пултăм. Вĕсем пирĕн патран 150 çухрăмра пурăнаççĕ.**

Василий Павлов та, анне пекех, леш тĕнчере канлĕх тупнă ахăр. Апла пулин те тăванĕсемпе çыхăнас килет. Тивĕçлĕ канăва тухсан пушă вăхăт нумайланчĕ. Çакăнпа усă курса йăх-несĕле тупма тĕллев тытрăм.

Василий Павлов 1945 çулта Тюмень облаçĕнчи Марай ялĕнчи политика тĕлĕшĕнчен айăпа кĕнисен тĕрминче пулнă. Манăн аннене, Валентина Самусевăна /1922 çулта çуралнă/, пĕчĕк чухнех ашшĕ-амăшĕпе пĕрле Беларуçран кăларса янă. Çитĕнсе çитсен вăл Василий Павловпа паллашнă. Аннеçĕм унпа çырăнман. Туй тума вăхăчĕ те, укçи-тенки те пулман ахăр. 1946 çулта вĕсен ывăл – Николай Васильевич Самусев – çуралнă.

Çамрăк чухне аннерен çав çын пирки ытларах ыйтса пĕлмелле пулнă та çав. Хăй сайра хутра ун çинчен каласа кăтартатчĕ. Вăл чăваш çынни пулнине ас тăватпăр. Тен, манăн анне пекех ашшĕ-амăшĕпе пĕрле килнĕ вăл çак тăрăха? Çакна уçăмлăнах палăртаймастăп.

Василий Павлов хутла пĕлнĕ, çавăнпах ĕçлесе юсанмалли лагерьте те кладовщикра, те шута илекенре ĕçленĕ. Вăл çакăнта лекиччен Чăваш Республикинче пурăнма пултарнă. Тен, кайран каялла таврăннă?

Юлашки çулсенче Тюмень облаçĕнчи архивсенче ун çинчен çырнине шырарăм – кăлăхах, документсем сыхланса юлман. Çавнашкалах Шупашкарти, Мускаври, Подольскри архивсене çырупа тухрăм – усси пулмарĕ. Чăваш Республикинче пурăнакан çынсенчен пулăшу ыйтмалли кăна юлчĕ. Василий Павлов çинчен мĕн те пулсан пĕлетĕр-и? Сас парсамăр! Темле пулсан та шанăçа çухатмастăп.

**Татьяна БЛАГИНИНА.**
Тюмень хули.

ХАСТАРРИСЕМ

# Юратăвне ачасене парнелет

Вăл калаçни радиопа телекурав дикторĕн сассине аса илтерет. Çавăн евĕрлех çепĕç те лăпкă. Чăвашла илемлĕ пуплекенскер пĕр вырăс сăмахне те хушса хумасть.

«Эпĕ ачаран вырăспа – вырăсла, чăвашпа тăван чĕлхепе калаçма хăнăхнă. Анне чĕлхинчен илемлĕреххи пур-ши çĕр çинче?» – терĕ хăйĕнпе паллаштарса Чăнлă поселокĕнчи «Зернышко» ача сачĕн воспитателĕ, эпир пынă кун гид рольне калăпланă кăмăллă хĕрарăм Ирина Рязанова.

Тутарстанри Пăва районĕнчи Пӳркел шкулне пĕтернĕ хыççăн Чĕмпĕрти педагогика училищинчен вĕренсе тухнă та – мĕнпур пурнăçне ачасене ăс парассине халалланă. Воспитатель тивĕçне пурнăçланисĕр пуçне Ирина Геннадьевна çамрăк ĕçтешĕсене пулăшать: çăмăл мар ĕçе хăнăхма, усăллă занятисем ирттерме, ашшĕ-амăшĕпе пĕр чĕлхе тупма, кун йĕркине калăплама вĕрентет. Ачалăхри ĕмĕчĕ пурнăçланнине пысăк телей тесе хаклать. Диплом илсе ĕçлеме пуçланăранпа пĕлтĕр 23 çул тулнă.

– Ĕçе тĕрĕс йĕркелесе пырас енĕпе пирĕн ача сачĕ Чăнлă районĕнче – чи ăнăçлисенчен пĕри. Ашшĕ-амăшĕ те кăмăллă. Пĕлӳ çурчĕ çĕнĕлле ĕçленинче, паллах, унăн ертӳçин Ирина Косолаповăн тӳпи пысăк. Пуçлăх кашни воспитателех хаклать, хавхалантарма, пулăшма тăрăшать. Ку профессире ачасене юратакан, чăтăмлă, пур енĕпе те пултаруллă çынсем çеç тытăнса тăнине аван ăнланать. Ачасемпе те, ашшĕ-амăшĕпе те пĕр чĕлхе тупма пĕлет. Сăмахран, çак кунсенче иртнĕ пухура Ирина Ивановна аслисене вĕсен ачисем çиекен апата тутантарса кăтартма май тупрĕ. Техĕмлĕ çимĕçпе пурте кăмăллă юлчĕç. Аслисен сĕнĕвĕсене итлерĕмĕр, ĕçре шута илме шантарса вĕсене парне кӳтĕмĕр: «Пирĕн юратнă ача сачĕ» хăтлав пурин кăмăлне те çĕклерĕ, – тет Ирина Рязанова.

Паян яваплă та опытлă педагог – ача садĕнчи çамрăк воспитательсен пĕрремĕш пулăшаканĕ. Хуть те мĕнле ыйтупа та ĕçтешĕсем Ирина Геннадьевна патне пыраççĕ. Пысăк пĕлӳллĕ специалист вара май килнĕ таран кашнинех пулăшма тăрăшать, паха сĕнӳсем парать. Ача сачĕпе паллашнă май, вăл çынсемпе еплерех хутшăнса вăй хунине сăнама тӳр килчĕ. Çапларах пĕтĕмлетӳ турăм: çамрăксем юратаççĕ ăна, кашни сăмахне вырăна хураççĕ, хисеплеççĕ.

– Ача садĕнче, шел, ятарлă кружоксем çук пирĕн. Анчах та воспитательсем ачасене спорт, чĕлхе, юрă-ташă тĕлĕнчен аталантарма май тупаççĕ, вăйă урлă çырма-вулама вĕрентеççĕ, занятийĕсене хăйне евĕр те интереслĕ ирттереççĕ. Еплерех теттесем ăсталаççĕ вĕсем! Пластилинран, хутран, чустаран, вĕтĕ шăрçаран, ытти тĕрлĕ япаларан. Алĕç ăсталăхĕ шăпăрлансене аталантарма май парать. Ушкăнсене илемлетме те кирлĕ вĕсем. «Ылтăн кĕркунне», Çĕнĕ çул, Хĕрарăмсен кунĕ, Пĕлӳ кунĕ тата ытти уявсем аван иртеççĕ садикре. Ĕçĕ нумай кунта. Воспитательсем садике шалушăн мар, ачасене юратнипе васкаççĕ, – терĕ Ирина Геннадьевна кăмăллăн йăл кулса.

**Елена СЕЛИВАНОВА.**
**Ульяновск облаçĕ.**
**/Чĕмпĕр чăвашĕсен "Канаш" хаçат материалĕпе усă курнă/.**

Кинемее скайп меслечĕпе хутшăнма килĕшсе кайнă – хăнисем пур, анчах та вĕсене хăналамалла мар.

* * *

Тепĕр чухне питĕ япăх пулса каять те мĕн тумаллине те пĕлместĕн – те 03 шăнкăравламалла, те 0,5 уçмалла...

* * *

Пĕчĕк арçын ачасем ашшĕамăшĕпе пĕрле çывăрма юратаççĕ. Çакă аслисене килĕшмест. Вĕсем пепкисене хăйсен кравачĕсенче çывăрма вĕрентесшĕн.

Черетлĕ хут командировкăна кайнă май ашшĕ ачисене каласа хăварать:

– Эпĕ сирĕн валли парнесем илсе килĕп, анчах та эсир уйрăм çывăрма хăнăхăр.

Вăхăт иртет. Ашшĕн таврăнмалли вăхăт та çитет. Ачасем амăшĕпе пĕрле ашшĕне кĕтсе илме каяççĕ. Акă самолет анса ларать. Кĕçех ачасен ашшĕ курăнса каять. Шăпăрлансен пĕр шухăш – вĕсем валли мĕн илсе килнĕ-ши? Çакна хăвăртрах пĕлес шухăшпа хайхисем пĕр аэропорт кăшкăраççĕ:

– Атте! Эсĕ килте пулман вăхăтра аннепе никам та çывăрман!!!

* * *

4 çулти Ваня амăшне джинс йышши шăлаварпа курма хăнăхнă – капла меллĕрех-çке. Пĕррехинче уява пуçтараннă май хĕрарăм хитре кĕпе тăхăнать. Çакна курсан Ваня аптрасах каять:

– Анне, эсĕ мĕн, хĕрача-имха?!

* * *

Ашшĕ пĕчĕк хĕрачине панулми çитересшĕн:

– Çи атя, вара ӳссе çитсен хитре пулăн.

– Атте, эсĕ пĕчĕк чух панулми çимен-им?

* * *

Хальхи шкул программинчен. Икĕ тĕве вĕçет: пĕри хура, тепри – сулахаялла. Ыйту: чĕрĕп 4 çулта пулсан килограмм асфальт мĕн чухлĕ таять?

* * *

Ачана киле панă ĕçсене пурнăçлама пулăшнă май ирĕксĕрех ыйту çуралать: эпĕ шкултах вĕреннĕ-ши?

* * *

Экзаменра студент билет туртса кăларать те хăвăртрах каялла хурать.

– Мĕншĕн апла турăн? – кăсăкланать преподаватель.

– 13-мĕш лекрĕ. Ырра мар ку. Эпĕ ку билета хуравлама килĕшместĕп.

– Эпĕ тĕшмĕше ĕненместĕп, хуравламах тивет санăн, – тет те преподаватель 13-мĕш билета шырама пуçлать.

Студент "пиллĕклĕх" хуравлать.

– Эсĕ мĕн, пур ыйтăва хуравлама та хатĕрленнĕ-им? – коридора тухсан хупăрласа илеççĕ ăна юлташĕсем.

– Çук, 13-мĕшне кăна, – йăл кулать студент.

* * *

Темиçе вырăнта вăй хуракансен кĕсьере яланах укçа пур. Çук, нумай ĕçлесе илнипе мар, тăкаклама вăхăт çуккипе.

* * *

Укçа телей кӳмест теççĕ. Тен, тĕрĕсех. Анчах та мĕн чухлĕ савăнăç кӳрет вăл!

* * *

Мунчаран тухрăм та тĕкĕр умне вырнаçрăм. Алă кремĕ, пит кремĕ, кĕлетке кремĕ...

– Мĕн тума çăваннă вара эсĕ? – тĕлĕнет ывăлăм.

* * *

**☺И-ХИ-ХИК☺**

Генералăн крокодил тирĕнчен çĕленĕ атă тăхăнас килсе кайнă. Çĕрле ятарлă рота Нил хĕррине çул тытать. Пĕр кун иртет, эрне, уйăх – нимĕнле хыпар та çук. Чăтăмĕ пĕтнипе генерал хăй юханшыв хĕррине çула тухать. Çитсен пăхать те – çыран хĕрринче тăп-тулли крокодил. Акă шывран черетлĕ чĕрчун курăнса каять. Çар çынни ăна пуçĕнчен шаплаттарать.

– Капитан юлташ! – кăшкăрать хăй крокодила çыран хĕррине сĕтĕрнĕ май. – Кунăн та уринче атă çук!

– Тăмсай! – хуравлать лешĕ хирĕç. – Эсĕ ытла хытă ан çап, унсăрăн пурин те аттисем хывăнса ӳкеççĕ авă.

* * *

Ирхине хам сăна тĕкĕрте курсассăн пластика хирургне качча тухас килет. Кăнтăрла – поварпа çемье çавăрас кăмăл çуралать. Каçхине кăмăла ытларах массажист çавăрĕччĕ. Çăмăл шухăшлă пулас эпĕ...

* * *

Çурла уйăхĕ вĕçленсе пырать. Шкула хатĕрленме пуçларăмăр. Дневник, пиçихи тата валерьянка туянтăмăр.

* * *

Яппунсем сехет шухăшласа кăларнă – пĕр усал сăмах илтсессĕн пĕр минут маларах куçса ларать. Хайхискерне тĕрĕслеме шухăшлаççĕ. Малтанах яппунсен хупахне çакаççĕ. Ирхине килсен пăхаççĕ те – сехет икĕ минут маларах пырать. Унтан американсене тĕрĕслеççĕ. Ирхине сехет пилĕк минут маларах пыни курăнть. Вырăссен черет çитет. Сехете каçхине çакса хăвараççĕ. Ирхине тĕрĕслеме килсен пăхаççĕ те – вырăнта çук хайхи. Барментан ыйтаççĕ:

– Ĕнер çакăнта çакса хăварнă сехет ăçта?

– Сехет пулчĕ-и вара вăл? – тĕлĕнет лешĕ. – Эпир ăна вентилятор пулĕ тесе... "Хĕлле пире мĕн тума кирлĕ-ха вăл?" – тесе шухăшларăмăр та...


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
НА 3, 6-7 ЭТАЖАХ
Дома печати. Справки по телефонам:
28-83-64, 28-83-70, 56-04-17.

### СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 32 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Песок, ОПГС, щебень, кирпич; **КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5 м. Бурение. Высокое качество. Доставка манипулятором. Без выходных. Т. 8-967-470-46-77.

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40, **полнотелые** 20х20х40. Доставка. Разгрузка. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**15.Кирпич** любой**.** Т. 8-961-339-33-63.

**16.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит – недорого. Т. 8-905-346-56-71.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 8-917-675-75-28.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, колодезные **кольца.** Т. 8-903-346-85-56.

**61.СРУБЫ, строительство** домов, бань «под ключ». Т. 89276670355.

**76.Срубы** с комплектацией, липовые срубы, **каркасные дома** – на заказ. **Д-ка.** Т. 89379528467.

**158.Прицеп мотоблока и мини-трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

**214.КЕРАМБЛОКИ** /40х20х20,40х12х20, 40х9х20/ пропаренные, вибропрессованные – недорого. **Доставка.** Т. 8-917-677-68-46.

**821.БЫЧКОВ** возрастом от 10 дней и 3-х месяцев, породы "Холмогоры" и "Голштино фризы". **Доставка – бесплатно.** Т. 8-903-320-27-47.

### ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Тел. 8-962-599-47-06.

**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 89603109878.

**50.Коров, тёлок.** Т. 89278508564.

**65.КРС – дорого.** Т. 89061327604

**612.Закупаем ПОРОСЯТ** – 5-20 кг. Т. 8-967-791-89-05.

**817.Коров, бычков, телок, лошадей.** Т. 8-961-348-91-88.

**818.Бычков, телок, коров, лошадей.** Т. 8-967-796-71-42.

### ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**36.Олег Боголюбов** маг, экстрасенс, хиромант. Поможет в решении семейных и финансовых проблем. Исправление судьбы. Снятие любых порч и проклятий. **Т. 8-906-380-86-28.**

**38.Чистка колодцев, скважин.** Водоснабжение. Т. 89674715070.

**51.Бурение колодцев. Кольца колодезные** замковые, качественные. Доставка. Скидки. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**812.Фото, видеосъемка.** Т. 8-917-676-35-24, Александр.


# Сăмахкаçмăш

**Николай КРАСНОВ *Й*ĕпреç районĕ/ хатĕрленĕ**

**Ăнлантарни:** Ыйтусене тĕрĕс хуравласассăн палăртнă ункăра ваттисен сăмахĕ вуланать.

1. Хӳри – тукмак, шăлĕ – шак-шак /туп.юм./. 2. Вăрман урлă хура каччă пăхса ларать /туп. юм./. 3. Çĕре чикрĕм – çĕрмерĕ, шыва ятăм – путмарĕ /туп.юм./. 4. ... вăйĕ – халăхра /ват. сăм./. 5. Кирлĕ чухне... те килте çук /каларăш/. 6. Каскаланă çĕрте... пулатех /ват.сăм./. 7. Те хула вăл, те пулă. 8. Кăлпасси ячĕ. 9. Вăл тăсăлма пулăшать. 10. Саккуна хирĕç тăни. 11. Хими элеменчĕ. 12. Çумăр вăхăтĕнче ӳкекен япала. 13. Пашалуран тутлărах. 14. Савăт-сапа. 15. Кушакăн чашăкĕ. 16. Сцена çинчи çын.




**2016 çулхи 50-мĕш тата 2017 çулхи 1-мĕш номерсенче пичетленнĕ сăмахкаçмăшсен хуравĕсем:**

Сехет йĕппи майлă: 1. Палас. 2. Парта. 3. Карат. 4. Курăк. 5. Тăпра. 6. Кĕлет. 7. Сухал. 8. Сухан. 9. Калан.

Сехет йĕппине хирĕç: 1. Палан. 2. Пăлан. 3. Карас. 4. Курка. 5. Турат. 6. Курак. 7. Салма. 8. Сехет. 9. Кахал.

* * *

А кукăрăлчăк тăрăх: 1. Асамат. 2. Тракт. 3. Тура. 4. Аппарат. 5. Трак. 6. Карат. 7. Тăрантас. 8. Сайра.

Б кукăрăлчăк тăрăх: 1. Атака. 2. Астра. 3. Авари. 4. Икс. 5. Спам. 6. Макака. 7. Астат. 8. Тренер. 9. Рак. 10. Кама.


**«ХЫПАР»**
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

4 627126 799869

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Д.А.МОИСЕЕВ

Чăваш хĕрарăмĕ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07
**Электрон почти:** hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 20.01.2017 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 8412. Заказ 167.